Пĕтĕм тĕнҫери, пролетарисем пĕрлешĕр!

## ХРЕСТЕН БИБЛИОТЕКИ № 3.

98

Агроном А. ЗУБРИЛИН.

# ҪАРАНСЕМ ӲСТЕРĔР.

ТАҪУК КУҪАРНĂ.



Центральное Восточное Издательство при НКН.

МОСКВА—1923.

Пĕтĕм тĕнҫери, пролетарисем, пĕрлешĕр!

КНИГОХРАНИЛИЩЕ

ХРЕҪТЕН БИБЛИОТЕКИ № 3

633
19

Агроном А. ЗУБРИЛИН.

# ҪАРАНСЕМ ӰСТЕРĔР.

ТАҪУК КУҪАРНӐ.

14877

ПРОВЕРЕНО 1936

Центральное Восточное Издательство при НКН.

МОСКВА—1923 г.

Главлит № 12502, Москва, Тираж 3000 экз.

Тип. „Красный Восток“ Никольская, 10.

# УМӖНКАЛАВ.

Пирӗн Раҫҫей, историре халиҫен пулман ҫаплӑ вӑхӑтра—революци вӑхӑтӗнҫе пурнаҫ.

Пирӗн октӑпӗр революци вӑл ӗҫхалӑхӗн класне—рабоҫисемпе хресҫенсен пурнӑҫне ҫӑмӑллатас, лайӑхлатас тесе тӑрӑшаҫ.

Революци хӑйӗн ҫи малтанхи ӗҫӗсене туса пӗтерҫӗ: дворянсемпе ҫӗрулпуҫӗсем пӗтӗм влаҫа хӑйсен аллинҫе тытса ӗҫхалӑхне пусмӑрлакансем, халӗ ҫук ӗнтӗ, вӗсем малашне те пулмӗҫ. Капиталпа ҫапӑҫас ӗҫ пӗтмен ха, вӑл ӗҫ ҫасах пӗтеймӗ тӗ, анҫах капитала ӑна лайӑхах амантнӑ, ҫавӑнпа та вӑл ӗҫхалӑхӗн хулпуҫҫинҫен ӗлӗкхи пек уртӑнаймасҫ.

Хресҫенсем, ӗмӗртеппех ҫӗр хӗсӗкпе аптӑранӑ; революци вӗсене улпутсен ҫӗрӗсене туртса илсе паҫӗ, хресҫенсен, ҫӗрсене ҫӗнӗ йӗркепе валеҫес ӗҫ те ӑнса пыраҫ. Ҫавӑнпа та хаҫхи хресҫенсем, ҫухӑн, выҫӑлӑ-туталлӑ пурнатпӑр тесе ӳпкелени, пире лайӑх пурнӑҫ тума ҫул памаҫҫӗ, тени—выранлӑ мар. Халӗ хресҫенӗн хӑйне валли телейлӗ, ҫителӗклӗ пурнӑҫ тӑвасси хӑйӗнҫен килет. Анҫах, ҫавӑн пек пурнӑҫа вӑл, хӑйӗн хуҫайствине хаҫхи пекех илсе пырсан, революци пулса иртсен те кураймӗ. Епӗ паҫрах каларӑм, революци хресҫенсене кирлӗ ӗҫне туса пӗтерҫӗ; вӑл хресҫен-

сен ăсхакăлне, ăслайлăхне нупласа тăракан усал тĕтĕме салатса йарса, вĕсене çĕнĕ йĕркепе, çĕнĕ шухăшпа çĕнĕ пурнăç тума—йалхуçайстви ĕçне наукă вĕрентнĕ пек илсе пыма хастарлăх та ирĕк те пађĕ.

Йалхуçайствине çĕнĕ çулпа йарса вăйлăлантарас ĕçре пире хресђенсене хутте хăçан та наукă анђах пулăшма пултараĭ. Çавăнпа та, хресђенĕн хăйĕн хуçайствине лайăхлатас тесен, йалхусайстви наукинђен—агрономсенђен, йаланах пулăшу ыйтмалла.

Йалхуçайстви ĕçне, наукă пек пур йенђен те, пĕлес тесен, пит нумай çул вĕренес пулаĭ, анђах пире вăхăт кĕтмест. Çавăнпа та, çав ĕçе вĕреннĕ çынсен, специалиссен. хăйсем хаљ мĕн вĕрентме пултарнине çĕр ĕçлекенсене каласа ăнлантарас пулаĭ; кашнăй шухăшĕсене хресђен халăх хушшине сарас, халăхăн йалхуçайствă револђутсине туса иртерес тесе ĕçлес пулаĭ.

Епĕ çырнă кĕнекесенђи вопроссем вĕсем пурте çĕрĕçне тунă ђухне (практикăра) кирлĕскерсем, анђах çапах та, вĕсен никĕсĕ—агрономи наукийех пулаĭ, Епĕ хам кĕнекесене пурне те, хресђенсем хуçайствисене лайăхлатма хăйсем шухăшлаĭђĕр, вĕсене çĕне, тĕрĕс çулпа илсе пытђăр, тесе çырнă. Анђах, çав ĕççене хăш выђăнта мĕнле, хăçан, мĕншĕн çапла йе капла тумаллине хресђенсене вырăнти агрономсен каласа вĕрентес пулаĭ.

**А. Зубрилин.**

Ана çинҭе çаран ӳстермесен—тырпулӑ тӑваймӑн.

I.

# КУРӐКПА ТЫРПУЛӐ.

Ӗлӗк авал, вырӑс патшалӑхӗ пуçланаҭҫенех, вырӑссем хаҭхи Палтти тинӗсӗн леш йенҭе пурӑнакан варяксене (варяги) акӑ мӗн каланӑ:

«Пирӗн çӗр аслӑ та пуйан та: есӗр, пирӗн пата пуçлӑх пулма, пире тытса тӑма килӗр», тенӗ. Вӗсем мухтанни тӗрӗсех.

Çавӑнтанпа ӗнтӗ пин çул ытла иртрӗ...

Мӗнпе мухтанма пултарӑпӑр-ши епӗр, çав авалхи çӗр ӗçлекен славянсен ӑрувӗсем (йӑхӗсем)? Ҭӑнах та, пирӗн çӗр вӑл ӗлӗкхинҭен тата темӗн ҭухлӗ аслӑланса, сарӑлса кайрӗ: хӗвеланӑçӗнҭен хӗвелтухӑçнелле вӑл 10 пин çухрӑл ҭӑсӑлса выртаҭ, Палтти тинӗсӗнҭен пуçласа Камҭаткӑпа Йаппун тинӗсӗсем патнех пырса перӗнет, унтан тата çурçӗрти Пӑрлӑ тинӗсрен пуçласа кӑнтӑрланалла, 3 пин çухрӑм сарӑлса кунӗн.-çӗрӗн хӗвел айӗнҭе пиççе выртакан Капкаспа Крӑма та çавӑрса илет.

Епӗр, Раççей халӑхӗ, мӗн пур çӗрӗнултӑ пайӗнҭен пӗр пайне йӑшӑнса тӑратпӑр. Анҭах пирӗн аслӑ çӗр авалхи пекех тутӑ, ырӑлӑхлӑ-ши?

Çак ыйтува хирӗç пирӗн хурланса «авалхи пек мар» тесе ирӗксӗрех калас пулаҭ.—Епӗр пурсӑмӑр та пӗлет-

пӗр: ҫак иртнӗ ҫулсенҫе Раҫҫей тырӑ пулман пирки, пит асапланҫӗ, нумай кӗпӗрнесенҫи халӑхсем тӑранаҫ-ҫен ҫийаймаҫҫӗ, вӗсене пулӑшмашкӑн правиттӗлствӑн мӗлйунӗпе укҫа пӗтерес пулаҫ.

«Ҫакӑн пек пурӑнӑҫ патне мӗнле пырса перӗнтӗмӗр-ши епӗр?».

Калаҫҫӗ: ҫанталӑкӗ наҫарланҫӗ, ҫӗрӗн сӗткенӗ пӗтнӗ, теҫҫӗ. Вӑл тӗрӗс хуҫ. Анҫах ак ҫакна манма йурамасҫ: ӑспа пӗлӗмлӗх аллинҫе, ҫанталӑк ҫӗр ӗҫлекенӗн ҫи лайӑх йулташӗ пулма пултараҫ, ҫӗр ӗҫлекене вӑл апат ҫимӗҫ те параҫ; вӑл хӑйӗн ырӑлӑхӗсене ҫийалтан ҫийала кӑларса ҫав ырӑлӑхсенҫен мӗнле усӑ курас тенӗ, ҫав май усӑ курма ирӗк параҫ; анҫах пӗлӗмлӗх ҫук ҫӗрте, тата ӗҫлеме пӗлмен, пикенсе ӗҫлемен ҫӗрте ҫав ҫанталӑк вӑл амаҫури амӑшӗнҫен те усал пулаҫ, ҫӗр ӗҫлекене вӑл пур йенҫен те инкек кӑтартаҫ, ӑна пӗр минут та канӑҫ памасҫ.

Раҫҫейре, (ытти ҫӗрти пекех), ҫанталӑк ырӑлӑхӗсене, етем пырса илсе пӗтеретҫенех, пухса сыхласа тӑнӑ.

Ӗлӗк, тӗнҫере халӑх сахал пулнӑ ҫухне, кашни ҫын, ӑҫта вырӑн йышӑнас килнӗ, ҫавӑнта вырӑнаҫнӑ; пӗр татӑк ҫӑкӑршӑн нумайах шухӑшламалла пулман. Тутӑ, хура тӑпра ҫинҫе пур йапала та, кӑвас хӑпарнӑ пек, кашласа ӳссе хӑпарса кайнӑ, сухапуҫӗпе кӑшт ҫӑр-ҫар шӑйӑркаласа тухнӑ теҫеттинрен 200—300 пӑт тырӑ, (пиҫке пек сарлака, кӗленҫе пек патрак пӗрҫӗллисем) илнӗ; улӑхсенҫе, ҫаранлӑхсенҫе курӑксем пӗр 8—9 ерне хушшинҫе пӗр ҫалӑша ҫитиҫҫен ӳссе, ахӑрса кайнӑ; ҫавӑн пек курӑксем хушшинҫе кӑнтӑр йенҫи касаксем' вырӑс ҫӗрне тискер тутарсен ортин ҫарӗсенҫен сыхайнл

ҫухне, хӑйсен тӗлӗнмелли лашисем ҫинҫен анмасӑрах пытанса тӑма пултарнӑ.

Ҫӗршыв ирӗк, ҫарансем хӑватлӑ пулнӑ пирки пирӗн тӗрлӗрен лашасем—100 шер пӑт туртакам питӑуксем (битюги) хыт ҫупакан рыссаксем, ҫерккес выҫӑхӗсем, вӑрӑм хӑрелле тем мӑнӑш сурӑхсем т. ыттисем пулса кайнӑ. Ҫаранлӑхсем, ҫтепсем (уйсем) утӑ-курӑк йышлӑ, селӗм пулнӑран выҫӑххисел те лайӑх пулнӑ. Пит аван, канлӗ, тутӑ, ырӑ курса пурӑннӑ ӗлӗкхи халӑх...

— Нумай пулӑ-ши вӑл самана иртни?!

— Ҫук, нумайах мар: пӗр 50—60 ҫул анҫах иртнӗ.

Ӑҫта кайса кӗнӗ ши ун ҫухнехи ырӑлӑхсем кӗске вӑхӑтра?

Мӗнле вӑл апла пӗр 50—60 ҫул хушшинҫех, ҫтепсем те пӗтнӗ, питӑук—лашасем те, украйнӑри (кӑлекен) кӑвак вӑкӑрсем те пӗтсех ҫитеҫҫӗ, тата Дон йенҫи тӗрлӗрен илемлӗ лашасем те кӗрнексӗрленсе пыраҫҫӗ?

Мӗнле пулса кайрӗ ха вӑл пӑхаттир пек халӑх выҫӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнасси, пӗтес йенне кайасси?

Ҫав ӗҫсем ак мӗнле пулса пыҫӗҫ: ҫтепри халӑх йышлӑланнӑҫемӗн йышлӑланса пынӑ, Раҫҫей варӗнҫе, Мускав таврашӗнҫе ӗнсе пурӑнакан халӑхсем пурте ҫавӑнталла, кӑнтӑралла тапнӑ.

Раҫҫейӗн кӑнтӑр йенӗ пит ҫас халӑхланса кайнӑ. Ҫӑвар шуҫӗ унта кунсерен анҫах мар, сехетсеренех хутшӑнса пынӑ. Тырпулӑ илес тесе унти ҫеремсене нумайран нумай сухаламалла пулнӑ. Тырӑпулӑ унта темиҫе ҫул таранҫҫенех пӗр вырӑнтах пит лайӑх пулнӑ, мӗншӗн тесен тӑпра темиҫе пин ҫул тӑршшӗнҫе пит лайӑх сӗткенленсе ҫитнӗ. Унтан вара ҫӗр наҫарлансан

кайран, ăна ахалех хăварнă, курăк ӳсме панă, тырпулăсене вара урăх çĕре, суха-пуç перĕнмен çĕре акнă.

Çавăн пек йĕркепе çĕртен усă курассине вара таптав йĕрки (залежная система) тенĕ, наҫарланса йулнă çĕр каллех тыр лайăх паракан пулассине унти халăх çанта лăкран анҫах кĕтнĕ, çынсем, хăйсен çĕрĕсене лайăхлатас тесе нимĕн те туман.

Анҫах курăк тымарсем карса илнĕ çтеп çĕрне сухапуçĕпе нумайах сухалаймăн. Çавăнпа та «сапан» йатлă акапуç (йăвăçран) кӳтрем, çавăрнăççăрскерне шухăшласа кăлармалла пулнă, ăна сакăр вăкăр та аран тапса туртнă.

Çавăн пек акапуççене çтепсем парăнҫĕç.

Виç аршăн çӳллĕш курăклă çтепсем çинҫе тулăсем курăнса, хăйсен ылттăн пуҫаххисене çĕре перĕнеҫҫенех усса ларнă.

Тепĕр 30—40 çултан çав сапан йатлă акапуç çтепсене йăлтахка пĕрех хирсе тăкнă.

Çĕрсене пит хытă сухаланă,—сĕткенленмешкĕн ирĕк паман, çĕрĕн пĕр канмасăр тырă ĕрҫетсе тăмалла пулнă.

Çĕрĕн вăйĕ хавшасах пынă. Тулă сахал пула пуçланă, ирĕксĕрех вара ырашпа сĕлĕ акмалла пулнă. Анҫах вăл тырсем те, çĕрĕн йулашки сĕткенне çăтса йарса, наҫар пула пуçланă.

Кăнтăр йенҫе хура тăпраллă çĕр çинҫе пурăнакан хресҫенсем хăйсен çтепĕсене сухаланă вăхăтра, çурçĕр йенҫе те çавăн пек ĕççемех пынă. Кунта çĕр ĕçлекене çерем мар хĕвел çути кĕреймен сĕм вăрмансем кансĕрленĕ. Çав вăрмансемпе кĕрешмешкĕн çĕрĕçлекен пур-

тăпа та вўтпа та тухнă. Виçĕ хăлаçа аран шăнăçакан хырсем, ţăрăшсем вара вутра кĕрлесе шатăртатса çунса кайнă; шурă хурăнсем те хăйсен тутлă куççулĕсене шарлаттарсах йухтарнă, пĕр хĕрхенмесĕр вĕсене нўрĕ çĕр çипе каса каса пăрахнă. Вара çав çунăк тункатасем хушшине ыраш, йĕтĕн, урпа, сĕлĕ тата ыттине те ака пуçланă. Малтанхи çулсенţе тырпулă кунта та пит лайăх пулнă, анţах кайран, ţилай çулсем иртсессĕн, çĕрĕн пуйанлăхĕ, сĕткенĕ сахалланнă та, тырпулă наţартан наţар пулса пынă. Çĕрĕçлекен тыр акмашкăн тепĕр вырăна куçнă, малтанхи уйĕсем (хирĕсем) унăн вăхăţĕпе каллех вăрман айне пулнă, çут çанталăк вара çĕрсене тепĕр хут пуйтарнă. Анţах вăл вăрмансене, вĕтлĕхсене нумайах тăратман, каллех çунтарса пĕтернĕ. Вăрмансем сахалланнăçемĕн сахалланса пынă, ĕлĕк çын пыман ţăтлăхсем вырăнţе усал çўçесем, ăвăссем, çирĕксем анţах йулнă.

Çавăн пек йĕркепе çĕртен усă курассине «вутпа ĕçлес йĕрке», тенĕ.

Çĕре тырпулă лайăх паракан тăвас тесен ватă йăвăççене мар, хунав вăрмансене вĕтлĕхсене, сухалаŤţен пĕр çул малтан касса йарса типĕтсе çунтарса кĕл хăварнă. Çавăн пек йĕркене вара «çĕре йăвăç кĕлĕпе тутăлантарас хуçайствă», тенĕ. Вăл ĕçе вăрман нумай вырăнсенţе: Волоктă, Арханкĕлск, Кострома кĕпĕрнисенţе тата Çĕпĕрте, халĕ те тăваççĕ.

Çапла ĕçлесен тырпулă та ытти те малтанхи çулсенţе пит лайăх пулаŤ, анţах çурçĕр йенţе вăл ĕç пуринţен ытла йĕтĕншĕн уăллă; ун пек йĕтĕн сўсĕ вара

Коллантири ҫи лайӑх йӗтӗн сӳсӗнҫен пӗрре те кайа мар.

Анҫах мӗнле йӗркесем-ши вӗсем? Ҫӗршыва, патшалӑха, хуҫайствӑна йухӑнтаракан йӗркесем анҫах вӗсем. Вӑрман, ҫаран пӗтнипе тырӑ тӑвас ӗҫ те наҫарланса пырать. Тӑпрасем хӑйсен тутлӑхне пӗтереҫҫӗ, тырпулӑсем наҫарланса, пӗрҫисем вӗтелсе пыраҫҫӗ, халӑх та тутӑ пулма пултараймасть.

Выҫӑх-ҫӗрлӗхсен, сӗтеклӗ утӑ вырӑнне улӑм, арпа йе ҫурт ҫийӗнҫи ҫӗрӗк улӑмсемпех пурӑнас пулать; ӗҫлессине вӗсен авалхи выҫӑхсенҫен те ытларах ӗҫлемелле. Йупах-ҫыхасене пӗр 5—6 ҫула ҫитиҫҫен кӳлмесӗр усрасси ҫинҫен калаҫмалли те ҫук—вӗсене 2—3 ҫула ҫитсенех кӳлсе ҫупаҫҫӗ.

Ӗмӗрӗ ӗмӗрӗпе пахаланса килнӗ выҫӑх имшерленсе пырать. Хресҫен хушшинҫе халӗ лайӑх лаша ҫукпа пӗрех. 15 пӑт тийанӑ лава вӑл такӑна такӑна аран туртать. Ӗнесем 6—7 пӑтран йӑвӑртараххисем питех ҫук. Ҫуркунне вӗсем ҫине пӑхма та йӑвӑр—вӗсен ун ҫухне шӑммисемпе тирӗсем анҫах йулаҫҫӗ, пӗре лайӑхрах ҫил вӗрсен йӑванса та кайма хатӗр.

Ҫтепсем пӗтрӗҫ, утӑсем пӗтрӗҫ, лайӑх выҫӑх та пӗтсех ҫитет, теҫеттинрен 200 пӑт тырӑ илнине тахӑҫанах маннӑ.

Мӗн пулӗ-ши малалла; мӗн сухалӑпӑр, ҫунтарӑпӑр-ши тата?

Ҫук, хуҫайствӑна малашне, ку таранҫҫен илсе пынӑ пек илсе пыма йурамасть, ҫаплах илсе пырсан епӗр йухӑнса выҫсах вилӗпӗр.

Пирĕн хуҫ те мĕнле пулсан та ҫĕрсене ĕлĕкхи пек тутă, сĕткенлĕ тумалла, ҫапла тумашкăн пире ваҙли тӳптӳрĕ те сапсарлака ҫул уҫҫа панă. Ҫав ҫулпа каймасан май килмест.

Ҫĕр ĕлĕкхи пекех тутă пултăр тесен ăна валли тислĕк (тирĕс) кирлĕ, тислĕк пулмашкăн выҙăх кирлĕ, выҙăха апат кирлĕ; апат-курăм тăвас тесен лайăх, сĕтеклĕ курăк пулма кирлĕ.

Ҫапла ĕнтĕ кашни кил хуҫин нимĕнрен ытла выҙăх апаҙĕ утă ытларах хатĕрлеме тăрăшас пулаҫ.

Анҙах ҫак тĕлĕшрен мĕн куратпăр ха епĕр? Пирĕн хресҙен хушшинҙе уйа курăк вăррисем акмаҫҫĕ.

Ҫарансем тата мĕнле! Вĕсем ҫинҙен калаҫмалли те ҫук: вĕсем ҫукпа пĕрех, пĕр пĕр тип ҫырмара хытса кайнă шултăра курăксем пулсан хресҙен вĕсене «утă», тет, анҙах ҫулас тесен ҫавана та кĕмест.

Ҫарансене лайăхлатас тесе ку таранҙҙен хресҙенсенҙен никам та тăрăшмасҫ.

Ҫак ĕҫ ҫинҙен шухăшласа пăхни пит усăллă пулĕҙҙĕ: пирĕн ҫарансем ҫинҙен пĕр теҫеттинрен 50 йе 70 пăтран ытла утă илейместĕн; ун пек ҫарансене вара лайăх ҫаран, теҫҫĕ, анҙах ун пеккисем пирĕн хушăра пит сахал; нумай ҫарансенҙе пĕр теҫеттинрен 25—40 пăт анҙах пуҫтараҫҫĕ, вăл та шултăра, сĕтеклĕ мар утă кăна пулаҫ,—ун пек утăсене пирĕн хăрăк ĕнесем анҙах ҫиме пултараҫҫĕ.

Ҫав вăхăтрах тата Анклири хресҙенсем пĕр теҫеттинрен ҫулталăкра 2500—3000 пăт утă пуҫтараҫҫĕ!

Ёненмелле-ши кăна?! Ёненме йураҫ. Анклире унта ҫанталăк ăшă та нӳрĕ тăраҫ, .хресҫенĕсем те тата пирĕн пек пĕлмесĕр ĕҫлемеҫҫĕ.

Ҫавăнпа та унта курăксем ҫасах капласа кайаҫҫĕ, ҫу каҫаҫҫен унта пĕр вырăнтанах 3—4 хут, хăш ҫул 5 хут та ҫулса илме пултараҫҫĕ, мĕншĕн тесĕн вĕсем ҫаранĕсене пăхма пĕлеҫҫĕ, лайăх курăксем ӳсмелле тăваҫҫĕ.

Акăҫҫансем пуринҫен ытла «Иттаҫйански райграс» йатлă ҫас ӳсекен курăк вăррине акаҫҫĕ. Вара ăна йаланах тислĕк шывĕпе шăвараҫҫĕ; тислĕк шывĕсене выҫăх картисенҫен йури алтса хунă ҫăлсене (пусăсене) йухса кĕмелле тунă; ҫав райграс йатлă курăк пĕр тавлăкра хăш ҫухне пĕр вершукран та ытла ӳсме пултараҫ, ҫу каҫаҫҫен вара ăна 7—8—9 та ҫулса илме пулаҫ.

Ҫак тĕлĕшрен мана хирĕҫ акă мĕн калама пултарĕҫ: Анклире унта ҫанталăк лайăхран, ăшăрах ҫарансем темиҫе хут ҫулмалла пулаҫҫĕ, пирĕн кунта ҫанталăк унти пек тăмасҫ, тесе калĕҫ. Анҫах илер епĕр Раҫҫейри хура тăпраллă мар вырăнсене, уйа курăк вăрри акнă вырăнсене. Йулашки ҫулсенҫе ҫавăн пек вырăнсенҫен ҫарансенҫен пит нумай утă илетҫĕҫ. Ҫанталăк лайăх пулнă ҫул, ҫавкапуҫĕ (клевер) акнă теҫеттинрен 300—400 пăт утă илме пултарнă. Ҫулса илсен кайран кайу ҫине выҫăхсем йамасан ҫурла уйăхĕн ҫурринҫе тата тепĕр 200 пăт ҫулса илме пултарнă, ҫапла вара ҫу каҫаҫҫен 500—600 пăт лайăх, сĕтеклĕ утă хатĕрлеме пултарнă. Пирĕн Раҫҫейри пахҫасенҫе курăксене 2—3 хут та ҫулса илеҫҫĕ, Апла пулсан кунти ҫанталăкпа та, кунти ҫĕрсем ҫинҫе те хресҫенсен хытса кайнă ҫара-

нĕсем çинҫе пулакан утăран 10 хут ытла, лайăхрах утă тума пулаĭ.

Хрантсире, тинĕс хĕрĕнҫе «Ланды» йатлă пит аслă, хăйăрлă çĕр выртаĭ. Айлăмсенҫе унта шыв шăршланса ушах (путках, йӳçĕлĕх) пулса тăраĭ; кунта хăмăшшем, хăйахсем тата çавăн пек ним йурăхсăр куракcем ӳснĕ. Лантăри çынсем нимĕн тума аптăранă: унти çынсем темĕн ҫухлĕ йăвăр ĕçлесе те хăйсене тăранмалăх апат çимĕç тăвайман.

Çавăнтанпа халĕ пĕр 30—40 çул анҫах иртнĕ.

Хаҫĕ мĕнле-ши унта? Халĕ унта сипсимĕс вăрмансем, çарансем кашласа ларaççĕ, темĕн тĕрлĕ п а х а выҫăхсем унта лайăх курăксем çинҫе ырă курса пурăнаççĕ. Çав çĕршыв кунсерен мар, сехетсеренех пуйанланса пыраĭ. Вăт мĕн тăваĭ етемĕн ăсĕпе ĕçĕ!

Акă, тата хамăр Раççейри тепĕр вырăна илер. Мускавран пĕр 40 çухрăмра, Мускав шывĕ тăрăх, ĕлĕк темĕн çӳллĕш курăклă улăхсем, халĕ нимĕнле çимĕç паман пушăхир (пустыня) пулса кайнă; айлăмрах вырăнсенҫе унта шăршлă ушахсемпе курăксем анҫах; кăшт çӳллĕрех вырăнсенҫе кăткă тĕмескисенҫен пуçне урăх нимĕн те çук.

Ҫулхула кĕпĕрнинҫе пĕр Павловск йатлă йал пур. Вăл йала ытла мăнăран, ҫаплăран йал мар, уйес хули теме пулаĭ. Вăт ĕнтĕ, çак йалти çынсем Окка йатлă мăн шыв тăрăх темиçе çĕр теçеттин улăх тытаççĕ. Унти ватçынсем каланă тăрăх, çав улăхсенҫи çарансенҫе ĕлĕк йуланутпа пыракан çын пытанма пултарнă, тет; халĕ унта пĕр теçеттин çинҫе 80—100 пăт йӳçĕ утă анҫах пулаĭ. Пирĕн Раççей пĕҫĕк мар. Унăн лайăх

улăхĕсем пур çĕрте те хытса çитрĕç, пур йенђе те. çарансем пĕтрĕç, пулсан та утă памаççĕ, тенĕ сассем илтĕнеççĕ.

Епĕр пурсăмăрта çĕр сахал, хĕсĕк тесе ўпкелетпĕр. Ăçтан çитĕ вăл—ĕлĕкхинђен 2—3 хут сахал тырпулă паракан çĕр.

Çук! Малашне те капла пурăнсан май килмест. Пур çĕрсене те ĕлĕкхи пек тырпулă паракан, сĕткенлĕ, тăвас пулаŤ. Анасене те çарансене те йĕркене кĕртес пулаŤ, çарансене курăк вăррисем акса йусас пулаŤ.

---

II.

## Çарансем нађарланни мĕнтен килет.

Çарансем (улăхсем) çинђе утă нађар пулни анасем çинђе нађар пулнă пекех, ђи малтан çĕр сĕткенсĕрленсе йулнинђен килет. Анасем çинђе тырă пултăр тесе хресђенсем ăна кăна тăваççĕ хуŤ—сухалаççĕ, сўреççĕ, унтан тата 2—3 çултан хурапусса хăварса кантараççĕ. Çарансемшĕн ун пек ĕç нимĕн те тумаççĕ: вĕсене ĕмĕрĕ ĕмĕрĕпе çулма, выђăх йарса таптаттарма анђах пĕлнĕ. Халĕ ĕнтĕ, çĕрĕн сĕткенĕсем пĕтес вĕçнех çитрĕçĕ, çĕр тутă, сĕткенлĕ пулмасан ун çинђе нимĕн те ўсме пултараймасŤ. Кăшт самайтарах çарансем те пирĕн мăн шывсем тăрăх анђах: кунта, çуркунне шыв йенў кайса йухнă ђухне, йушкăнсем ларса йулаççĕ, мăн

улăхсенҫи ҫарансем вара йушкăнтан сĕткен илсе кашни ҫулсеренех лайăх пулаҫҫĕ.

Ҫарансем хытса, сĕткенсĕрленсе пынă майĕпе, вĕсем ҫинҫе ӳсекен курăксем те улшăнаҫҫĕ: ҫӳллĕ, лайăх курăксем—сӳсен, кушакхӳри, шурут тата ыттисем хуллехех пĕтсе пырса хăйсен вырăнĕсене антăра ҫарăкне, тата ҫавăн пек шултăра, усал йурăхсăр курăксене парса хăвараҫҫĕ. кайран ҫав усал курăксем те, ҫĕртен йулашки сĕткенне ĕмсе илсе, улшăнаҫҫĕ, вĕсен вырăнне тата усалтарах курăксем шăтса тухаҫҫĕ, ҫапла вара пĕр майах усал курăк хыҫҫăн тата усалтараххи шăтса тухса ҫĕрĕн сĕткенне пĕтереҫҫĕ те вара выҫăх апаҫĕ тума йурăхлă курăксем нимĕнли те ӳсме пултараймаҫҫĕ. Вара ҫаран ҫине мăк пуса пуҫлать. Мăка ăна тутă, сĕткенлĕ ҫĕр кирлĕ мар. Пĕр вырăнта шăтса тухса вăй илсен вăл ҫасах сарăлма пултарать. Ҫарана карса илсе хăй пуҫлăх пулсан мăк вăл ытти курăксене пĕрне те ӳсме памасть; ытти курăксем ăна, ҫын пырса пулăшмасан, ҫĕнтĕрейес ҫук. Мăк вăл ҫăмăр шывне йе сывлăм нӳрĕлĕхне ҫĕре кĕме ҫарса тăрать, ҫавăнпа та вара мăкла ҫĕр типĕ пулать. Мăк ҫук ҫĕрти ҫарансем ҫăмăр пулман ҫул та, сывлăм нӳррипех, шăрăха ҫăтса ирттерме пултараҫҫĕ, мăкла ҫарансем вара ĕнсе пĕтеҫҫĕ. Йĕпе ҫулсенҫе, ҫав мăк шыва туртса илсе, ăна хĕвел пăхнă ҫухне типме йамасть, вара курăксем ытлашши нӳрĕлĕхрен каллех аптăрама пултараҫҫĕ.

Мăк вăл ăшша ҫарса тăракан йапала, ун ҫинҫен йăвăҫ пӳрт туса мăкланă ҫын кашнийех пĕлет. Мăк пӳрт ăшшине ҫарса тăма пултарать пулсан вăл ҫаран ҫинҫе те ҫавăн пекех: пĕр-пĕр сивĕ, пĕлĕтлĕ вăхăтра,

пĕр-ик сехетлĕхе хĕвел пăхсан, унăн ăшши мăк виттĕр курăк тымарĕсем патне çитеймест; вара курăксем çанталăк ăшăтатъ̆ђен пурăнаймаççĕ, сивĕпе пĕтеççĕ.

Çаран çĕрĕ мĕнле нађарланса пынине асăрхас тесен кашнийех асăрхаса пыма пултаратъ̆. Сăмахран илер епĕр пĕр çырмана. Çав çырма тĕпĕнђе, шыв йухакан шăйăрланăн ик йенĕпе, çаран аван пулатъ̆ унта кайăкпуçĕсем те, сўсенсем те, шурутсем те—пурте пур. Мĕншĕн тесен, çуркунне шыв анса çерем çине тухса, унта курăка ўсме кирлĕ йапаласем, йушкăнсем хăваратъ̆, çавăнпа та унта лайăх курăксем ўсеççĕ; лайăх курăксем вĕсем сĕткенлĕ мар, тутă мар çĕр çинђе ўсмеççĕ. Унтан тата çырма хĕррине ана пуçĕ пырса тăрănатъ̆ пулсан çырма айăккисенђе çаран, çырма тĕпĕнђи пекех мар пулсан та, ытла нађарах пулмасъ̆. Мĕншĕн тесен ана çинђен çуркунне каллех йушкăн анса, çерем çине курăка ўсмешкĕн кирлĕ йапаласем йулаççĕ, анђах унта вара ђавкапуç пек курăксем вĕтелеççĕ.

Çырма хĕрĕнђе йушкăн анмалли вырăн çук пулсан, йăвăç тĕмисем йе пĕр пĕр ниме йурăхсăр пушă вырăн анђах пулсан, йушкăн анмалли вырăнсем пулмасан, вара ун пек çырмара çаран пит нађар пулатъ̆; сĕткенлĕ çўллĕ курăксем, кайăкпуçĕсем унта вара çукпа пĕрех. Вĕсем вырăнне лутра, нађар курăксем мăкпа хутăш ўссе лараççĕ. Çавăн пек вырăнта шыв тăратъ̆ пулсан, унта вара мăкран пуçне антраçарăкĕ, хăйах пулатъ̆; кăшт тĕмескерех вырăн пулсан вара сыснакурăкĕсем (подорожник) тата çавăн пек йурăхсăр курăксем пулаççĕ.

Татах калатăп: çарансем нађарланни ђи малтан,

тăпрара сĕткен пĕтнинҫеп, килет; унтан тата выҫăхсене вăхăтсăр кăларса йарса таптаттарнинҫен килет.

Ҫуркунне хресҫенсем хăйсен выҫăххисене, ҫарансем йур айĕнҫен тухнă тухманах, уйа кăларса ҫапҫутă шыв выртакан ҫарансем тăрăх ҫăртарса ҫӳреҫҫĕ. Ҫапла вара выҫăхсем ҫĕрле пуҫланă курăксен ҫамрăк тымарĕсене ҫĕмĕреҫҫĕ те нумай курăксем шăтмасăр йулаҫҫĕ. Сурăхсем тата курăк папкисене кăшласа ҫĕмĕреҫҫĕ, ҫав папкăсенҫен кайран лайăх курăксем тĕмипех пулĕҫҫĕҫ.

Аса илер ха епĕр, мĕнле кашни хресҫен хăйĕн калҫисене таптасран, ҫĕмĕресрен сыхлаĭ.

Ҫаран ҫинҫе вĕт кашни ҫулсеренех пĕр тымартан ӳсекен курăксемсĕр пуҫне тата пĕр ҫул маларах ытти вырăнсенҫен ҫилпе вĕҫсе килнĕ курăк вăррисенҫен шăтнă курăксем те пит нумай пулаҫсĕ.

Ҫав курăк папкисене анасем ҫинҫи калҫасенҫен те хытăрах пăхни кирлĕ, мĕншĕн тесен калҫасем вĕсем ҫемҫе кăпка вырăнта лараҫҫĕ; анҫах ҫĕнĕ курăк тымарĕн малтан ҫереме ҫĕмĕрсе кĕрсе хăватлăланас пулаĭ, унтан тин вара вăл хăй ҫинҫе пулакан ҫеҫкисене, ҫеҫекĕсене тăрантарма пултараĭ. Ҫерем ҫине ҫуркунне выҫăх йанинҫен пит нумай курăксем пĕтеҫҫĕ, ҫеремĕ те хытаĭ.

Хытă ҫĕре ăшă та, нӳрĕлĕх те, сывлăш ты ҫителĕклĕ кĕмест.

Ҫапла ĕнтĕ, ҫуркунне ҫарансем ҫине выҫăхсем йанинҫен ак мĕнле сийенсем пулаҫҫĕ: ҫĕр хытаĭ, ҫамрăк тымарсем, анҫах ҫурăлакан курăк папкисем, ҫĕмĕрлеҫҫĕ. Кам утă ытларах, лайăхрах тăвас тет, ҫавăн хăйĕн ҫаранĕ ҫине, утăсене ҫулса пĕтереҫҫенех, выҫăхсем йама-



14877

сăр тăмалла. Унсăр пуçне тата йĕпе вăхăтра çарансем çинҫе выҫăх çӳренинҫен кăткă тĕмескисем, тата урăх тĕмескесем тухма пултараççĕ, вара вĕсем çарана наҫарлатаççĕ. Кам кĕтӳ кĕтсе курнă, вăл ак çак малалла çырни çинҫен пит лайăх пĕлет: кĕтӳве пĕр пĕр шыв хĕррине шăварма аппă ҫухне, йе пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçарнă ҫухне, ĕнесем ҫас ҫасах пĕрин хыççăн тепĕри утса пĕр çул туса пыраççĕ, çавăн пирки вара çарансем çинҫе сукмак çулсем пулса йулаççĕ, йулашкинҫен вара çав çулсем тăрăх кăткă тĕмескисем, йе лупашкасем пулса кайаççĕ. Арлансем, кайурасем те сийенсем сахалах тумаççĕ, вĕсем шăтăксем ҫаваласа пит нумай тăпра куписем тăваççĕ, çав купасене салатса йамасан, вĕсем тепĕр çулне курăкланса кайаççĕ. Кăткăсем те сахалах ĕçлемеççĕ çав купасем, тĕмесем тăвас тĕлĕшрен. Вăт вара çавăн пек тĕмесем çултан çул нумайланса пыраççĕ те, тӳрем çаран вара пĕтĕмпех пăсăлса кайаҋ, ун çинҫе вара лайăх курăксем шăтми пулаççĕ хăш пĕр вырăнта шăтсан та вĕсене çавапа çулса илме пит кансĕр.

Çаран наҫарланасси тата хăй çинҫе шыв нумайҫҫен выртнинҫен килет, вăл йапала мăн шывсем хĕрĕнҫи улăхсенҫе пулма пултараҋ. Çурхи шывсем ҫакнă вăхăтра çарансем çинҫе йаланах йушкăнсем йулаççĕ. Çав йушкăнсем улăх сарлакăшпех пур вырăна та пĕр пекрех, çӳхен ларса йулсан, вĕсенҫен усăран пуçне нимĕн те пулмĕҫҫĕ, мĕншĕн тесен вĕсем пит çĕткенлĕ, курăкə пит лайăх ӳстереççĕ. Анҫах ĕç ҫас-ҫасах урăхла пулаҋ: йушкăнсем вырăнĕ вырăнĕпе хулăм ларса йулаççĕ, ун çинҫе вара курăк вуçах шăтмасҋ. Унтан тата çав

йушкăн тĕмисем çуркунне йелў кайнă шыва кайалла, çырмана кĕме ҭараççĕ, — çавăн пек улăхсенҭе вара шыв кўленҭĕкĕсем нумай йулаççĕ. Çав куленҭĕксем айĕнҭи çĕрсем шыва сăхмаççĕ—вĕсенҭен вара ушахсем пулса кайаççĕ; вара унта шăмакка тата хăйах (осока) йатлă курăксем т. ы. ўсеççĕ.

Унсăр пуçне тата ушахсем пуласси унта йухакан пĕҭĕк çырмасем йушкăнланнинҭен, пĕвеленнинҭен тата çавăн пек йапаласенҭен килме пултараӗ.

Çарансем пăсăласси тата çўçе тĕмисем, çирĕк тĕмисем, тата çавăн пек ытти йăвăç тĕмисем, пулнинҭен килĕт. Çав йăвăс тĕмисем хăватлăланса, сарăлса кайсан курăка сулхăм туса тăраççĕ; çĕрĕн сĕткенне ахалех ĕçсе лараççĕ; утă çулас вăхăтра çулма та типĕтме те кансĕрлеççĕ.

Вăт ĕнтĕ, çак йапаласенҭен çарансем пăсăласси килет; çарансенҭе курăксем лайăх ўсҭĕр, утă ытларах тăвас текен хресҭенĕн çав йапаласемпе кĕрешес пулаӗ.

---

III.

# ТĔРЛĔ ТĔСЛĔ ÇАРАНСЕНЕ МĔНЛЕ ТИПĔТМЕЛЛИПЕ ТАСАТАССИ ÇИНҬЕН.

Çарансем, улăхсем ултă тĕслĕ пулма пултараççĕ: 1) йухакан шыв хĕрĕнҭи çарансем; 2) ушахланман айлăмсенҭи çарансем, (ун пек айлăмсенҭе тырă аксан шыва кайма пултараӗ, çавăнпа та айлăмсенҭи çĕрсене анасем тумаççĕ); 3) тырпулă акма пăрахнă анасенҭен

пулнӑ ҫарансем; 4) вӑрман ҫаранӗсем; 5) уйрипе вӑрманти типӗ ҫырмасенҫи ҫарансем; 6) ҫулма ҫарман ӑшӑх ушахсенҫи ҫарансем,—пулаҫҫӗ.

Ҫарансене лайӑхлатмалли майсем ҫинҫен калаҫаӗҫен малтан епӗ, хресҫене мӗнле ҫав ӗҫ йенне сулӑнтарасси ҫинҫен пӗр-ик сӑмах калас тетӗп.

Ҫав ӗҫе ҫи малтан анасем ҫине курӑк вӑррисам акас ӗҫе ӑнтарса пуҫласа йамалла. Хресҫенсем, хӑйсен анисем ҫине ҫавкапуҫӗ акса пысӑк усӑ пулнине, куҫпа курсассӑн анҫах ҫаранӗсене лайӑхлатасси ҫинҫен пикенсех шухӑшлама тытӑнӗҫ, — унҫҫен вӗсем ҫаранӗсене мӗнле майпа лайӑхлатассине шухӑшлас ҫук.

Вӑл йапала, хресҫен кутӑнӗнҫен те, кахалӗнҫен те мар,—акӑ мӗнтен килет: анасене виҫӗ пусува анҫах уйӗрнӑ пирки, курӑк—вӑррисем акаймаҫҫӗ, вара хресҫенсем кашни ҫулах выҫӑх апаҫсӗр аптӑраҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсем кашни ҫерем татӑкне хакла хурса, сухаламаҫҫӗ (ҫарана хӑвараҫҫӗ). Хӑйсен ҫаранӗсем ҫинҫен вӗсем пӗр курӑк хӑвармасӑр, ушахрисене сӑртрисене тиркемесӗр, пурне те ҫулса илеҫҫӗ, анҫах ҫапах та хӑш ҫухне 15—20 ҫухрӑмри ҫарансене сутӑн, тара илеҫҫӗ.

Анасем ҫине курӑк вӑррисем ака пуҫласан, сӗтеклӗ ҫавкапуҫ утисем тӑва пуҫласан, наҫар ҫарансемсӗр те пурӑнма пулаӗ, вӗсене сухаласа кӑпкалантарса лайӑх ҫарансем тума пулаӗ. Унсӑр пуҫне тата хресҫен, хӑйӗн тырӑ пулман ани ҫинҫе акнӑ курӑк вӑрринҫен лайӑх ҫаран пулнине хӑй куҫӗпех курсан, вара вӑл ытти наҫар ҫаранӗсене лайӑхлатмашкӑн хӗпӗртесе ӗҫлеме пуҫлаӗ: малтан вӑл хӑй ҫӗрӗ ҫине те шанми пулнӑ, ку ҫӗртен епӗ темӗн ҫухлӗ ӗҫлесен те усӑ курайас ҫук, тепӗ.

Анасем ҫине куръ̆к акни ӑна пӗтӗмпех урӑхла шухӑшлаттарма пултарать̆, ҫӗр ҧенне те урӑхла пӑхтарать̆.

Ҫарансене, лайӑхлатас тесен ҭи малтан ушах вырӑнсене типӗтес пулать̆, тункатасем ҫӳҫе тӗмисем тата ҫавӑн пек урӑх йӑвӑҫ тӗмисем пулсан, вӗсене кӑларас пулать̆, кӑткӑ тӗмисене ҭулсене хӑварма йурамасть̆, пӗр сӑмахпа каласан ҫарана ака-пуҫӗпе, тимӗр сӳресемпе сӳремелле тӑвас пулать̆.

Ҫарансене канавсем алтса типӗтеҫҫӗ. Ҫуркунне йе ҫулла, ҫӑмӑрсем хытӑ ҫунӑ ҭухне, ҫаран ҫинҭи ушахри шыв, хӑш йеннелле, хӑш йӗрпе ытларах йухнине асӑрхас пулать̆, вара ҫав йӗр (лупашка) тӑрӑх пӗҭӗк патаксем лартса, йе шӑтӑксем ҭакаласа паллӑ тӑвас пулать̆; Ҫав ӗҫе ушахри шыва йухтармалли канава ҭакаламашкӑн тумалла, канавсене вӗсене патаксем тӑрӑхах ҭавмасан та йурат, апла ҭавсан куккӑр — маккӑрсем нумай пулаҫҫӗ, анҭах ҫав майпа илсе пырса канавпе тӳртерех тума тӑрӑшас пулать̆. Ушахсене типӗтмалли канавсем варӗнҭисем тата айӑккинҭисем пулма пултараҫҫӗ. Варӗнҭи канавӗ ҫаран ҫинҭи ҭи айлӑм вырӑнпа кайса пӗр-пӗр йухакан шыва йе ҫырмана кӗрет.

Ҫав варӗнҭи канава пӗр пек мар, хӑшне мӑн, хӑшне пӗҭӗкрех ушахра шыв мӗн ҭухлӗ иккенне пӗлсе тӑваҫҫӗ, анҭах сарлакӑшне тарнӑшӗнҭен икӗ хут ытларах тумалла. Канавне ҭавса пӗтерсен ушахри шыва уҫҫа йарса канав тӑрӑх мӗнле йухнине асӑрхаҫҫӗ: канавра шыв хӑш-хӑш вырӑнта ҭарӑнса тӑрать̆ пулсан ҫав тӗлте канава тата ҭаваласҫӗ, сарлакӑшне те сараҫҫӗ; анҭах сарлакӑшӗ тарнӑшӗнҭен кунта та икӗ хут ытла пулмалла.

Айăккинҫи канавсене айлăмрах вырăнсемпе ҫавса йарса варĕнҫи канава кĕртеççĕ. Айăккинҫи канавсене миçе, тата мĕн тарăнăш тумалли çинҫен вырăнта анҫах пĕлме пулаť. Вĕсене сахалрах тума тăрăшас пулаť, тата варĕнҫи канава кĕнĕ çĕрте куккăрсем тăвас пулмасť. Канав ҫавнă ҫухне тăприне икĕ йеннелле те ывăтса пырас пулаť, анҫах тăпри канав тăршшĕпех пĕр татăксăр купаланса пыраť пулсан, вара кашни 5 ҫалăшран уçă вырăн, шыв йухма хăварас пулаť. Ушах вырăн пĕр ик виç çул иртсен—типсессĕн, çав канавсене тасатас, çĕнетес пулаť.

Канавсене ҫавнă ҫухне çаран çинҫи тĕрлĕрен тĕмескесене те тасатаççĕ. Хуťте мĕнле пулнă тĕмесене те пурне те тимĕр кĕреçепех илме йураť, анҫах тата курăк тымарĕсенҫен пулнă курăклă тĕмесем. (тылапуççисем) пулаççĕ, вĕсене çивĕҫ пуртăсăр, йе лумсăр пуçне урăх нимĕнпе те илейместĕн. Касса илнĕ тĕмесене тăрхала купасем (сарлакăшĕ 3 аршăна йахăн, çӳллĕшĕ 2 аршăн) туса хураççĕ. Çав купасене пĕр пек ретпе, вĕсен хушшипе акапуçĕ, йе сӳре иртмелле, купаласа хурас пулаť.

Пĕр 3—4 çул иртсен çав купаласа хунă тĕмескесем çĕреççĕ те тăпраланса саланса кайаççĕ; çавăн пек ҫухне вĕсене кĕреçепе пур çĕре те пĕр пек салатма çăмăл. Çав тĕмескесенҫен пулнă тăпра пит тутă: унпа сатпахҫисене те, çимĕç пахҫисене те, анасене те тутăлантарма пулаť.

Çаран çинҫе йăвăç тункатисем пулсан вĕсене ҫакаласах кăлармалла.

Вăрçă пуçланаťҫенхи çулсенҫе, Çемски Управсем тата çĕрĕçне туса тăракан комиççисем, тункатасем кă-

лармалли машшинсем хатĕрлесе, вĕсене хресҫенсене тункатасем кăларса усă курма, йўнĕ хакпах параĭҫĕҫ. Машинĕсем вĕсем хаклă: 200—500 тенкĕ пулнă.

Ҫав машшинсем ҫумне тункатасем кăларас тесен, лашасем кўлес пулаĭ. Лашасем унта авăн ҫапмалли машшин хушшинҫи пекех пыраҫҫĕ; ĕҫ ҫас пулаĭ.

Ҫав машшинсене ĕлĕк америкрен илсе килкелетҫĕҫ. Анҫах вăл машшинсемпе вăрман касса анасем тăвас тенĕ ҫухне кăна ĕҫлеме пулаĭ. Ҫарансем ҫинҫе пысăк тункатасем пулмаҫҫĕ те, пĕҫĕк йăвăҫ тĕмисене вĕсене пуртă-кĕреҫепех пĕтерме пулаĭ.

---

IV.

# МĔН ТĂВАС ПУЛАĬ ҪАРАНСЕМПЕ МАЛАЛЛА.

Епĕр ĕнтĕ ҫарансем ҫинҫи ушахсене типĕтрĕмĕр, тункатасене, йăвăҫ тĕмисене кăлартăмăр пултăр. Халĕ ĕнтĕ, шухăшласа пăхмалла: ҫаранах тусан лайăх-ши ку ҫĕртен, йе ана туса тырă акса тăрсан авантарах-ши? Ку ĕҫе туса татаĭҫен акă мĕн пĕлес пулаĭ: ҫав лайăхлатнă ҫĕр ҫине ыраш аксан (ҫуркунне шыва кайас ҫук пулсан); ҫĕр ҫаран валли наҫар, ыҫăх ҫимен йуҫĕ курăк кăкĕсем нумай пулсан,—ун пек ҫарантан анасем тусан авантарах пулаĭ. Виҫĕ пусува уйăрнă кивĕ анасене нумай пусуллă туса ҫавкапуҫĕ тата ҫавăн пек лайăх курăк вăррисем акмалла тăвас пулаĭ, анҫах курăкĕсене кашни ҫĕнĕ пусура 3—4 ҫул тăруках

акса çулса тăрас пулаť. Ђавкапуçĕ акнă ана çине йулашки икĕ çулĕнђе выђăхсем те йама йураť; утă пит кирлĕ пулсан вара çулмах та пулаť.

Çав типĕтнĕ, тасатнă çарантан, питĕ айлăм вырăн пирки, анасем тума май килмест пулсан, ăна вара çаран халĕнех хăварас пулаť, ăна лайăх çаран тăвас тесен икĕ май (çул) пур.

Малтанхи çулĕ вăл акă çак: çарана акапуçĕпе алса, тĕрлĕрен имсем сапса нумай çула пыракан курăк вăррисем акас пулаť. Çарана сухаланинђен, пĕр ик-виç çул çĕртме тыррисем: сĕлĕ, вир т. ыт. акма май килет пулсан анђах усă курма пулаť ĕнтĕ хуť. Вăл акă мĕнтен килет: сухаланă çерем татăкĕсем пĕтĕмпех вакланса лайăх хура тăпра пулса каймасăр унта акнă курăк нумайа пымасť, апла ап пултăр тесен 2—3 çул сухаласа сÿрес пулаť.

Малтан икĕ лаша кÿлекен, (касăсене пĕр пĕрин çине çĕмĕрмесĕр, çăтă çавăрса хуракан) тимĕр акапуçĕпе алмалла. Çак ĕçе тунă ђухне, акапуçĕ касăран тухса кайса çереме касмасăр хăварасран пит лайăх асăрхаса касăсене лайăх çавăрса хуртарса пымалла; малтан лайăх кастарса пымасан, кайран çĕре алпа кăпкалантарма кансĕр пулаť.

Тĕмескесемлĕ çарана алнă ђухне иккĕн ĕçлемелле: пĕри лашисене тата акапуçне тытса пыраť, тепри ун хыçĕнђен лайăх çавăрăнса выртмасăр йулакан тĕмеллĕ касăсене урипе пускаласа выртарса пыраť; иккĕмĕшĕн çивĕђ тимĕр кĕреçе йăтса пырас пулаť, вара вăл унпа тĕмаллĕ касăсене, çавăрăнса выртманскерсене, урлă касса татса вырттараť. Çарана çурла уйăхĕнђех сухаласа

тепĕр çуркуннеҫҫен хăварас пулаҭ: кĕркуннепе хĕлле вара—ун пек çĕр пит лайăх тарлаҭ те шăнаҭ.

Çуркунне çав касăсене сӳрелесе тикĕслес пулаҭ, 5-6 хут тăрăх сӳрелес пулаҭ, унтан тата урлă 3—4 хут сӳрелесе тухмалла. Çавна тума тимĕр сӳре, иккĕллĕ сӳре «кукăр-маккăр» («зиг-заг») йатлăскер пит пулăшаҭ. Ăна тимĕр шăллă йăвăç сӳрепе те сӳрелеме пулаҭ, сӳре çине пĕр-ик йăвăртарах вутсыппи хурас пулаҭ; вара сӳре тарăнрах пыма пултараҭ, анҫах ун пек ҫухне йăвăç сӳре ҫасах çĕмĕрĕлсе кайаҭ.

Çаран çеремне малалла тăпралантарса пырас тесен тарилккеллĕ (тарелочная) сӳрепе сӳресен пит лайăх пулаҭ. Çав тарилккеллĕ сӳрене урăх йатпа «Рандаль», теççĕ. Пĕҫĕк хуçайствăсене, хресҫен хуçайствисене сакăр тарилкеллĕ рантаҭ пит йурăхлă пулаҭ, çав рантаҭ икĕ тĕнĕллĕ, кашни тĕнĕлĕнҫен тăватшар тарилкке тыттарнă. Ранталĕн тата тимĕр туйа пур, çав туйапа тĕнĕлĕсене пур йеннелле те пăрма пулаҭ. Тарилккисен сарлакăшĕ 16 ҭуйма йе урăхла каласан çиҫĕ вершук çур пулас пулаҭ.

Икĕ лайăх лашапа ĕçлесен çав ранталпе пĕр кунта пĕр теçеттин çурă йе икĕ теçеттинĕпех сӳрелесе пăрахма пулаҭ.

Рантаҭ вăл пăснă çерем кассисене анҫах мар, тыр акмалли анасене сӳреме те пит лайăх; уйри ана çине улма лартмашкăн тислĕк тăкнă пулсан, çав тислĕксем, касă айне пулнăскерсем рантаҭпе сӳрелесен çийеле тухаймаççĕ, ахаҭ сӳрепе сӳрелесен, сӳре шăлĕсем нумай çаклатса кăлараççĕ.

Лайăх сухаласа сӳрелесе тухнă çаран вырăнĕ çине, ушах вырăн мар пулсан, тĕрлĕ ӳсекен йапаласем: сĕлĕ, йе виккăпа сĕлĕ хутăш, йĕтĕн тата вир акма йурать.

Çав йапаласен вăррисене алăпа сапсах акаççĕ, сĕлĕпе виккă аксан вара малтан рантаҧпе унтан сӳрепе сӳрелеççĕ.

Çавăн ҭухне рантаҧпе иккĕ, май килсен, виççĕ те сӳресе тухсан аван:—малтанхи хут урлă, иккĕмĕш хут тăрăх сӳрес пулать. Çавăн ҭухне рантаҧ тĕнĕлĕсене пĕреççĕ те кĕтес туса сӳрелеççĕ, лаша тытса çӳлте ларса пыраканĕ ун ҭухне лашисене йăвăртарах пулсан та çӳлтен анмасть. Мĕншĕн тесен вăл çӳлте ларса пусса пынипе ранталĕн тарилккисем касăсене лайăх кăпкалантараççĕ. Çӳлте ларса пыраканĕ анса утсассăн, лайăх сӳрейместĕн: тарилккисем çĕре пĕр вершукран ытла кĕреймеççĕ вара.

Рантаҧ хыççăн, паçăр каланă пек, 2—3 хут сӳрепе сӳрелеççĕ, сӳре вăл тикĕслетет, çийеле тухнă çерем касăкĕсене пур çĕрелле те пĕр пек салатать те çĕре вара лайăхах кăпкалантарса йарать.

Пăснă çаран çĕрĕ çине йĕтĕн йе вир акас тесессĕнĕçе кăшт урăхларах тумалла: ун ҭухне малтан рантаҧпе сӳрес пулать—ун хыçĕнҭен — тин акас пулать. Мĕншĕн тесен йĕтĕн тата вир вăррисем, вĕтĕрехскерсем, ытла айала кайсан шăтмаççĕ.

Çапла вара касăсене сӳрепе пĕрре сӳрелесен кайран ик-виç кун иртсен, сухаланă çарапа, урлă та тăрăх та, рантаҧпе сӳрелеççĕ, унтан каллех сӳрепе сӳрелеççĕ, вара, çав иккĕмĕш хут сӳрелесен, йĕтĕн йе вир акаççĕ те каллех сӳрелеççĕ.

Сӗлӗпе виккӑ хутӑш акас тесен, (анҫах рантаҫ тупма май ҫук пулсан), ун пек ҫух ҫав вӑрлӑхсене ҫуркунне касӑсене сӳрелемесӗрех акаҫҫӗ, аксассӑнах вара сӳрелеҫҫӗ.

Ҫаран пӑсса акнӑ ҫурхи тырсем пулса ҫитсен, вӗсене пуҫтарсан, ҫав ҫарана кӗркуннех (анҫах малтан сухаланӑ майлӑ мар), урлӑ сухалаҫҫӗ; ун ҫухне акапуҫӗн шӑрҫӗ (ҫӗҫҫи) тата унӑн тӗрепӗ ҫивӗҫ пулма кирлӗ, вӗсем ҫивӗҫ пулмасан кивӗ касӑсем таткаланса саланса кайма пултараҫҫӗ, лайӑх ҫавӑрӑнса выртмаҫҫӗ; ӗҫлеме йӑвӑр, ӗҫӗ те наҫар пулаҭ; акапуҫӗн ҫӗҫҫине лайӑх хӑйранӑ пулсан касӑсем лайӑх касӑлса, пӗремӗк пек, тӑваткал татӑксем пулса йулаҫҫӗ.

Т е п ӗ р ҫ у л н е, ҫуркунне, ҫав ҫӗре каллех сухаламалла, вара ҫӗр пит кӑпка, улма ани пек, пулаҭ; унта вара улма та лартма пулаҭ, урпа йе виккӑпа сӗлӗ т. ыт. акма пулаҭ; Ку ҫухне рантаҫ кирлӗ мар, акапуҫӗпе сӳре анҫах кирлӗ.

Акас тесен, ҫав ҫӗр ҫине сӗлӗпе тата урпапа пӗрле хутӑштарса тӗрлӗрен лайӑх курӑк вӑррисем те акма пулаҭ. Анҫах курӑк вӑррисем акассине тепӗр ҫула хӑварсан авантарах пулӗҫҫӗ, ҫапла тусан вара ӗлӗкхи ҫерем катӑкӗсем пӗтӗмпех ишӗлсе, тӑпраланса каймашкӑн вӑхӑт ҫителӗклӗ пулаҭ.

Курӑк вӑррисене акаҭҫен ҫӗре тӗрлӗрен имҫамсемпе (минеральные туки) имлесе лайӑхлатас пулаҭ.

Ҫуркунне, ҫӗршыв типсенех, кашни теҫеттин ҫине 24—30 пӑт таран «томасӑв шлак (фосфорнокислое удобрение)» тата 8 пӑт «калийнӑй соҫ (кали меттал тӑварӗ)»—йатлӑ имсене салатса пӑрахас пулаҭ, унтан

вара кăшт çийелтен сӳрелес пулай. Пĕр 6—7 кун иртсессĕн çĕре $1^1/_2$—2 вершук тарнăшĕ йарса çĕнĕрен сухаламалла, вара сĕлĕ йе урпа .акмалла, унтан çавăн çинех тĕрлĕрен курăк вăррисем акмалла та йулашкинђен каллех пит лайăх сӳресе тухмалла.

Çарапсем çинђен вĕрентекен тĕрлĕрен кĕнекесем çинђе, темиçе курăк вăррине пĕрçĕре хутăштарса акас пулай тесе вĕрентеççĕ. Анђах тĕрлĕрен курăк вăррисене тупма та йăвăр, илме те хаклă, çавăнпа та епĕ вырăс хуçайствисенђе ђилай ăнăçлă пулакан курăксем çинђен анђах калаçас тетĕп.

Пирĕн хăйăрлă, тăмлă тата хуратăпра çинђе акă мĕнле курăк вăррисене хутăштарса аксан ăнма пултарĕ. Вĕсем пĕр теçеттине акас тесен акă мĕн ђухлĕ кирлĕ:

1) Ђавкапуçĕ (кайăкпуçĕ) хĕрли . . 10 кĕрепенкĕ
2) „ „ шурри . . 5 „
3) „ „ шветски . 5 „
4) Кушакхӳри (тимофеевка) . . . 15 „
5) Сӳсен (костер безостый) . . . 30—40 „
6) Шурут (пырей) . . . . . . 10—15 „

Вырăн айлăмлă тата çĕрĕ хура пулсан, унта ђавкапуç вăррисене, пуринђен ытла хĕрлине сахалтарах акас пулай, вара мĕн ђухлĕ сахаллатнă, çавăн ђухлĕ иккĕ ытларах кушакхӳрипе сӳсен вăррисене хутăштарса акас пулай.

Торфлă çарапсем çинђе ђавкапуçĕсем нађар пулаççĕ, çавăнпа та вĕсене ун пек çĕре акмасан та йурай, акас тесен те çав виç тĕслĕ кайăкпуçĕсенђен кашнинех 5-шер кĕрепенке анђах акса пăхма йурай, ытти хутăшне

вара 25 кӗрепенкӗ кушакхӯринҫен тата 60—80 кӗрепенкӗ сӯсентен туса акас пулаҭ.

Куракӑ вӑррисене пӗр-пӗр копперативрен йе тата ҫавӑн пек уҫрештенисенҫен илсен авантарах шанҫӑклӑрах пулӑҭ. Куракӑ вӑррисене харпӑр хӑй хуҫайствисенҫе те тума пултараҫҫӗ. Ӑна акӑ ҫапла тумалла.

Ҫаран ҫинҫе ҫи сӗткенлӗ, ҫӯллӗ, лайӑх куракӑсем ӯсекен вырӑн пулаҭ. Ҫав вырӑн тавралла виҫӗ вӗрлӗклӗ карта тытса ҫавӑрӑнса, унта выҫӑх кӗмелле мар тӑвас пулаҭ.

Утӑ уйӑхӗн ҫурринҫе йе йулашки кунӗсенҫе (вӑл ҫапталӑкран килет) ҫав лайӑх куракӑ вӑррисем пулса ҫитеҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра вӗсене йе ҫурлапа вырса йе ҫавапа ҫулса пуҫтарса кӗлтесем тӑвас пулаҭ; унтан вара хӗвел ҫинҫе лайӑх типӗтсе ҫапас пулаҭ.

Ҫапнӑ хыҫҫӑн—арпасемпе пӗрле ҫи лайӑх куракӑ вӑррисем пулаҫҫӗ.

Арпапа куракӑ вӑррин хутӑшне (смесь) ҫуркуннеҫҫен пӗр-пӗр типӗрех вырӑна купаласа хурса усрас пулаҭ; унтан вара ҫаран тума хатӗрлесе хӑварнӑ ана ҫине, сӗлӗ, урпа тана куракӑсенҫен: кушакхӯрин, ҫавкапуҫӗн вӑррисене аксассӑнах, ҫав килте хатӗрленӗ куракӑ вӑррине (арпаллӑскерне) илсе тухса акас пулаҭ, вара ҫав акнӑ йапаласен вӑррисене пит лайӑх сӯрелесе хӑварас пулаҭ.

Анҫах ҫав арпаллӑ куракӑ вӑррисене хӗрхенме кирлӗ мар—капни теҫеттин ҫине 4—5 пӑтран кайа мар акмалла.

V.

# СĔТЕКЛĔ КУРĂКСЕМ ÇИНҪЕН КĔСКЕН КАЛАНИ.

Çав паçăр каланă курăксем пурте нумай çула пыракан курăксен шутĕнҫе тăраççĕ; урăхла каласан, вĕсене пĕрре аксан, вĕсен тымарĕсенҫен темиçе çул таранҫҫен çав курăксемех шăтса пулса пыраççĕ.

Виçĕ тĕслĕ ҫавкапуçĕсем вĕсем йĕнĕллĕ çимĕç ўсекен йапаласем (пăрçа) ретĕнҫе шутланаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсен вăррисем пăрçа йевĕрлĕ йе çавăн пек тата пуҫахлă çимĕç йевĕрлĕ пулаççĕ. Çав йыш шутĕнҫех тата пĕр çула пыракан виккăпа йасмăк та шутланаççĕ. Пуҫахлă курăксем хăйсен тутăлăхĕпе ҫи лайăх курăксем шутĕнҫе тăраççĕ: 2 кĕрепенке çур ҫавкапуç ути пĕр кĕрепенке сĕлĕ çăнăхĕ тĕшне тăрайĕ.

Унсăр пуçне тата пуҫахлă курăксем акă мĕнтен пит паллă вырăнта тăраççĕ: вĕсен тымарĕсем çинҫе шĕпĕн пек йапаласем пур, çав йапаласем (пурнăç тума) сывлăшранах «азот» йатлă им уйăрса илеççĕ, çав азот йатлă им курăка ўсмешкĕн пит кирлĕ йапала. Сывлăшра азот вăл нумай; çĕрте сахал. Пуҫахлă ўсекен йапаласем ўснĕ ҫухне ăна çĕртен пит нумай илеççĕ. Сывлăш çĕре пĕрмайах кĕрсе тăрайĕ. Вара пуҫахлă йапаласен тымарĕсем азота сывлăшран çавăн ҫухне туртса (сăхса) илеççĕ.

Ҫавкапуç акса çулса илнĕ анана сухаласассăн, çав тăпрара азот—100 ăлав тислĕкре мĕн ҫухлĕ, çавăн ҫухлех пулма пултарайĕ.

Ђавкапуçӗ кивелнӗ çӗрсене пит лайӑхлантараŤ çавӑнпа та ђавкапуçӗ акнӑ теçеттинине, пӗре йӗтӗн акма илес пулсан та, пит хаклӑ парса илеççӗ.

Ђавкапуçӗн тӗп тымарӗ пит тарӑн—10—12 вершук кайаŤ, çавӑнпа та вӑл уйара, ытти кӗске тымарлӑ курӑксенђен лайӑхрах ђӑтса иртерет. Ђавкапуçӗн турађӗ вӑрӑмӑшӗсем, тутӑ çӗр çинђе пулсан, пӗр аршӑн ытла пулаççӗ. Çеçкисемпе пуçӗсем, унӑн турађӗсем çумӗнђе çирӗп тӑмаççӗ, çавӑнпа та ђавкапуç утине пит ађаш тыткаласа пуçтарас пулаŤ.

Пӗр-пӗр вырӑна пӗрре аксассӑн вӑл темиçе çула та пыраŤ, анђах çаран çине аксан ана çине акнинђен нумайа пыраŤ.

Ӑнӑçлӑ çулсенђе ђавкапуç утине пӗр теçеттин çинђе 400—500 пӑт пуçтарма пулаŤ.

Ђавкапуçне маларах çулсассӑн, ун хыççӑн ӑшӑ çӑмӑр çусассӑн, çанталӑкта ӑшӑ тӑрсассӑн, вара çав çулнех тепре çулса илме пулаŤ.

Ђавкапуçӗ малтанхи çул вӑрах ӳсет, кӗске пулаŤ, çулмалӑх пулмасŤ, çавӑнпа та ӑна хӑйне кӑна уйрӑм мар, йе ырашпа, йе сӗлӗпе, йе урпапа хутӑштарса акас пулаŤ; ырашпа акас пулсан çуркунне, йур кайса çӗршыв типетђенех акас пулаŤ; акнӑ вӑррисене çийелех çӗр айне тумасӑрах хӑварас пулаŤ, йӗпе çӗр пусӑрӑннӑ майӗпе вӗсем хӑйсемех (çӗре кӗрсе ларса) шӑтса тухаççӗ; çурхи тырӑпа хутӑш акмалла пулсан ђавкапуç вӑррисене, хутӑштарнӑ тырӑпа пӗр вӑхӑтрах акса сӳрелесе хӑварас пулаŤ.

Анасем çине йаланах хӗрлӗ ђавкапуç акаççӗ, вӑл пит лайӑх хунаŤ, анђах çарансем çине акас пулсан

уп çумне пилӗкшер кӗрепенкӗ шветскипе шурӑ ђавкапуçӗсене хутӑштарса акас пулаҭ.

Шветски йатлӑ ђавкапуçӗпе хӗрлӗ ђавкапуçӗ пӗр пӗринђен акӑ мӗнле паллӑсемпе уйӑрӑлса тӑраççӗ. Шветски йатлин унӑн пуçӗн айал йенӗ çутӑ кӑвак-хӗрлӗ тӗслӗ пулаҭ, тӑрринелле хӑпарнӑçемӗн вара шуралса пыраҭ. Ӑна хӑй кӑна аксан вӑл хӗрлинђен утӑ сахалтарах параҭ, анђах пӗре аксан нумай çула пыраҭ; ђас çухалмасҭ.

Шурӑ ђавкапуçӗ хуҭте мӗнле çӗр çинђе те пулаҭ.

Вӑл пит лутра пулаҭ, анђах çулса пуçтарсан йе выљӑх йарса çитерсен кайран тепӗр хут пит ђас ӳссе çулмалӑх пулаҭ. Вӑл хӗрли пек мар: тӑм укнӗ пулсан та, выљӑх ђӗрлӗх таптанинђен те ђасах парӑнмасҭ.

Сӳсен, кушакхӳри тата шурут йатлӑ курӑксем вӗсем ыраш, тулӑ, сӗлӗ, урпа, вир, куккурус йевӗрлӗскерсем.

Кушакхӳрипе сӳсен вӗсем нумай çула пыракан, ђас çухалман курӑксен шутӗнђе тӑраççӗ. Лайӑх çӗрсем çинђе вӗсем пит ӑнса çӳллӗ ӳсеççӗ, утӑ нумай параççӗ.

Кушакхӳри, ђавкапуç, сӳсен тата шурут вӑррисене пӗрле хутӑштарса аксассӑн утӑ пит нумай тума пулаҭ.

---

VI.

# ÇАРАНСЕНЕ МАЛАЛЛА МӖНЛЕ ЛАЙӐХЛАТАССИ ÇИНЂЕН.

Çӗнӗ çаран çине, малтанхи икӗ çул выљӑхђӗрлӗх йама йурамасҭ,—лайӑхрах çеремленме вӑхӑт парас пулаҭ.

Унтан вара выҫӑх йарас тесен малтанах каланӑ йӗркесене асра тытас пулат̆: ҫуркунне тата ҫӑмӑр хытӑ ҫунӑ ҫухне выҫӑхсене ҫаран ҫине йама йурамаст̆. Ҫаран лайӑх пултӑр тесен, ӑна сӳрелес, имлес пулат̆, арлан, кӑткӑ тӗмисене тасатсах тӑрас пулат̆, канавсем пулсан вӗсене тасатас пулат̆.

Ҫарана кашни ҫулах, ҫуркунне, ҫӗр ҫинҫе лаша ура йӗрри пулми пулсан, сӳрелес пулат̆. Сӳри—кукӑр-маккӑр» йатлӑ тимӗр сӳре пултӑр. Ҫаран мӗн ҫухлӗ кивӗрех, ҫавӑн ҫухлӗ ун ҫинҫе мӑк нумайрах пулат̆, ҫавӑн ҫухлӗ лайӑхрах сӳрелес пулат̆; малтанхи 2—3 ҫулта сӳрене пӗр йӗрпе ик хут йарсан та йурат̆, кайран вара 3—4 хут йе 6 хут йарсан та ытлашки пулмаст̆. Ун ҫухне сӳре шӑлӗсем хӑш курӑксене кӑкланинҫен хӑрамалли ҫук, ҫакна анҫах астуса тӑмалла: ҫаран ҫийӗ мӗн ҫухлӗ кӑпкарах пулӗ, ҫавӑн ҫухлӗ сывлӑш та ӑшӑ та нурӗлӗх те ҫӗр ӑшне ытларах кӗрӗҫ, курӑк тымарӗсем те вара хӑватлӑланса, ӗрҫесе кайӗҫ.

Сӳрелетҫен малтан, ҫуркунне, ҫаран ҫине кашни 2—3 ҫулта пӗрре 8 йе 10 пӑт «суперфосфат» йатлӑ им тата 4—5 пӑт «калийни соҫ» йе 20—30 пӑт йӑвӑҫ кӗлне сапас пулат̆.

Лайӑхлатсах пынӑ ҫаран ҫинҫен пӗр 8—9 ҫул хушши пит лайӑх утӑ илсе тӑма пулат̆, унтан вара ӑна ҫӗнӗрен сухаласа курӑк вӑррисене те ҫӗнӗрен акас пулат̆.

Курӑксем пикенсе ӳснӗ ҫухне (вӑл вӑхӑт хуратӑпраллӑ мар кӗпӗрнесенҫе ҫӗртме уйӑхӗнҫе пулат̆) уйар шӑрӑх кунсем пулса кайсан, ҫарансем канавӗсене (пулсан) ҫӑмӑр ҫусан шыв тулмашкӑн, шыв ахалех йухса

ан кайтăр, уйарпа ĕннĕ çĕре сăхса кĕтĕр тесе пĕвелесе хурас пулаҫ. Кĕркуннерехпе вара пĕвисене татса йарса канавĕсене тасатас пулаҫ.

---

VII.

## ÇАРАНСЕНЕ СУХАЛАМАСĂР ЛАЙĂХЛАТАССИ ÇИНҔЕН.

Хăш-хăш çарансем çуркунне те çулла та йĕпепе аптăраççĕ, ун пек çарана пăссан та çурхи тырăсене акма май килмест, ăна çаран халĕнех хăварса сухаламасăрах лайăхлатмалли май пур.

Çуркунне, çĕр шыв типсессĕн, çарана тăрăх та урлă та рантаҫпе çĕмĕреççĕ, унтан вара тимĕр сӳрепе сӳрелеççĕ.

Çав хатĕрсем çаран çинҔи мăка ҔилайҔавса кăлараççĕ, çаран çийĕ те Ҕилай кăпкаланаҫ. Мăк нумай пулсан ăна кĕреплепе пуçтараççĕ, кайран, типсен вара çунтараççĕ.

Малтанхи хут сӳрелесен пĕр теçеттин çаран çине 24—30 пăт «томасов шлак», 8—10 пăт «калини соҫ» сапса салатаççĕ, унтан вара курăк вăррисене паçăр каланă йĕркепе акаççĕ.

Сапнă имсене те, акнă курăк вăррисене те рантаҫпе пĕр йĕрпе икĕ хут йарса айала тăваççĕ; ун хыçĕнҔен каллех куккăр-маккăр сӳре пыраҫ.

---

## VIII.

# ÇАРАНСЕНЕ ЛАЙĂХЛАТНИНҪЕН ПУЛНĂ УСĂ.

Çарансене Мускав кĕпĕрнинҫе те ытти кĕпĕрнесенҫе те пит нумай сăнанă. Çапла сăнаса пынă тăрăх акă мĕн палăрнă: çарансем çине сĕтеклĕ курăк вăррисене акмасан та, ун вырăнне тĕрлĕрен имсем сапсан, утă ĕлĕк пулнинҫен пĕрре çурă йе иккĕ те ытларах тума пулаŤ; унсăр пуçне тата хăйах, лашакăшкарĕ, тата ытти çавăн пек йурăхсăртарах курăксем, пуринҫен ытла тĕрлĕ тĕслĕ ҫавхапуçĕсем, çаран çине, томасов шлакпа калийни соҫ сапаŤҫен пулманскерсем, шăтса тухаççĕ. Мана пуринҫен ытла Мускав кĕпĕрнинҫи, Волоколамск уйесĕнҫи Парфенккăвă йатлă йалти хресҫенсем хăйсен çаранĕсене лайăхлатни аса килет. Вĕсене çаран валеçнĕ ҫухне, хăш çĕрте, пĕр теçеттин лайăх çаран парас вырăнне ик теçеттин ушахлă çарансем каса каса панă. Çав ушахлă çаран аслăшĕнҫе мĕн пурĕ 180 теçеттин пулнă. Унта çынсем те ĕнесем те пута, пута ларнă; утă çуласси çинҫен шухăшламалли те çук пулнă; тĕрлĕрен тĕмесем унта туллийех пулнă.

Анҫах пĕр 20 çул кайа унти хресҫенсем çав ушах вырăнтан тĕрлĕ йенелле канавсем пĕр икĕ çухрăм тăршшĕ ҫавса кайса çав ушаха типĕтнĕ. Тĕмескесене пурне те касса илсе купаланă; унтан вара 20 теçеттин çине кушакхӳри йатлă курăк вăррине акнă. Пĕр усăсăр выртнă çĕр çинҫен вара вĕсем тепĕр çулнех кашни 10-шар ăлав лайăх, сĕтеклĕ утă илнĕ. Иккĕмĕш çулта

çарансем тата лайăхрах пулнă, виççĕмĕш çулта вара вĕсем кашни теçеттинрен 15 шер 16-шар ăлав утă илнĕ. Хресţенĕсем ĕçĕ ăннине кура пит хĕпĕртенĕ: кашни çулсеренех вара вĕсем хăйсен ушахлă çĕрĕсене типĕтсе çаранĕсене аслăлатса пынă.

Вĕсем хыççăн Шишковă, Тавитăвă, Хруђувă т. ыт. йалсенђи хресţенсем те кайнă. Канавсем алтса, тĕмескесене касса пухса, унтан кушакпуç курăк вăрри илсе вĕсем кашни теçеттиншĕн 40 тенке йахăп анђах пĕтернĕ.

Тĕмесем çĕрсе пулнă тăпрасене хресţенсем анасем çине йе çимĕç—пахђисене тăкнă, мĕншĕн тесен вĕсем тислĕкрен пĕрре те кайа мар. Çавăн пек епĕ асăрханă ĕç тата тепре пур. Питĕр хули çывăхĕнђе Заболотски йатлă йалхуçайствиллĕ опђествăн пĕр имени пулнă. Çав именин мăк пуснă çарансем пулнă. Çаранĕ çинђе кирлĕ мар курăксемпе йăвăç тĕмисем анђах пулнă, çавăнпа та утă 6 купаран (30 пăтран) ытла тăвайман, вăл та пулин нађар утă пулнă.

1908-мĕш çулта çав йăвăç тĕмисене йăлтах пĕтернĕ. Çуркунне (çав çулнех) çаранне икĕ лаша кўлмелли акапуçĕпе сухаланă та йĕтĕн акнă. Вăл çул уйар (шăрăх), пулнă пирки йĕтĕн лайăхах пулман.

1909 мĕш çулта, çуркунне, çав çарана çĕнĕрен сухаланă (сухапуçĕпе анђах) та сĕлĕ те курăк вăррисем те акнă тата кашни теçеттин çине: 36 пăт томасов шлак, -6 пăт калийни сођ, 6 пăт ђилийски çелитрă йатлă имсем сапнă.

Сĕлĕ пит лайăх пулна: пĕр теçеттин çинђен 83 пăт сĕлĕ, 220 пăт улăм илнĕ.

Тепӗр ҫулне (1910 мӗш ҫулта), акнӑ куръӑк вӑррисенҫен пулнӑ ута—малтан ҫулнине те, кайран кайу ӳстерсе ҫурла уйӑхӗнҫе ҫулнине те виҫҫе пӑхнӑ та акӑ мӗн курнӑ:

Сухаласа, имлесе куръӑк—вӑррисем акнӑ теҫеттинрен 387 пӑт лайӑх сӗтеклӗ утӑ илнӗ, йунашар вырттакан сухаламан, имлемен теҫеттинрен 60 пӑт анҫах пулнӑ.

Ҫӗре лайӑхлатмашкӑн тата акмашкӑн пухнӑ расхута сӗллийех тавӑрса панӑ, унсӑр пуҫне тата ҫав хуҫайствӑ утӑ ӗлӗкхинҫен ултӑ хут ытларах тӑва пуҫланӑ.
Ҫапла ӗнтӗ ҫарансене лайӑхлатнинҫен усӑ пит нумай курма пулаҫ.

---

I.

# ХИРЕ МӖНЛЕ ТӐВАТӐ ПУССА УЙӐРМАЛИ ҪИНҪЕН.

Малалла епӗ хире мӗнле тӑватӑ пусса уйӑрмалли ҫинҫен каласа парӑп.

Епӗр хӑш ҫӗртре те пулин хресҫенсен виҫӗ пусӑллӑ хир пултӑр, пур пусси те пӗр пек пулҫӗр, кашни пуссине ҫун пуҫне 8 пӑт ыраш акаҫҫӗ тетпӗр. Ыраш калҫа пуссин пӗр йенҫе ҫырма, ҫул, йе ҫуран ҫул пултӑр. Йалтан тухсанах (йунашарах) ыраш пуссинҫен 2 шер пӑт ыраш акмалӑх вырӑна касса илер. Ҫапла тусан епӗр ыраш пуссин тӑваттӑмӗш пайне касса илетпӗр; йулашкине ҫун пуҫне 6 пӑт акмалли вырӑна, ҫуркунне 18 кӗрепенке ҫавка пуҫпе, 6-шар кӗрепенке кушакхӳри акса хӑварар.

Тата çаплах, ҫавкапуç акса хăварнă ыраш пусси çумĕнҫи хура пусса та çаплах уйăрар; унщăн ҫун пуçне 6-шар пăт тырă акмалăх уйăрса, çур-тырри пусси çумне хутăштарăпăр. Навус тăкма вăхăт çитсен 9 шар пăт акакан хура пусса кăна тăкмалла.

Халĕ ĕнтĕ пирĕн, çуртырри пуссине анҫах икĕ пĕр пек пайа уйăрмалла; пĕр пайне ҫавкапуç акмасăр хăварнă ыраш пуссин пайĕ çумне хушмалла, тепĕр пайĕ çумне хура пуссăн навус тăкмасăр хăварнă пайне хушса вара пирĕн тăваттăмĕш пусă пулаť. Халĕ ĕнтĕ, кашни çĕнĕ пусăра ыраш ҫун пуçне 6-шар пăт кăна кĕрет.

Хир виçĕ пусăллă (пулнă) ҫухне ыраш ҫун пуçне 10 пăт пулнă пулсан, 4 пусăллă тăвас тесен, кашни пусăран $2^1/_2$ акмалăх вырăн касса илмелле; 12-шер пăт пулсан—3 шер пăт акмалăх; çапла тусан вара ыраш çĕнĕ пусăра та 9-шар пăт акăнаť.

1896 çулта, Волоколам уйесри, Брюханов йалĕсем ыраша çырмапа хăйсен йалĕнҫен Якшина кайакан çул хушшине акнă; вăл пусăран Якшина кайакан çулпа вăрмана кайакан çуран çул (утма çул) хушшинҫен 4 пайне касса илнĕ: çав халĕ касса илнĕ пайĕ çине ҫавкапуç акман, тепĕр пысăк пайĕ çине ҫун пуçне 18-шар кĕрепенке ҫавкапуçпе 6 шар кĕрепенкĕ кушакхўри акса хăварнă.

Çырман тепĕр йенҫе хура пусă. Вăл пусăран Брюхановоран Дятлова кайакан çултан сулахайалла, пĕр татăк касса илсе навус та тăкмарĕç, ыраш та акмарĕç.

Çур тырри пусси Руза çырми тăрăх пыраť. Вăл пусă арман çулĕпе çурмалла уйăрлаť; унăн çырма йенҫи

пайӗ ҫумне хура пуссӑн навус тӑкмасӑр йулнӑ пайне хушнӑ та 3 мӗш пусӑ пулнӑ; тепӗр пайӗ ҫумне ҫавкапуҫ акмасӑр йулнӑ пайне хушнӑ та 4 пусӑ пулнӑ.

Брюхановри хресҫенсем 1896 ҫулта 88 ҫун ҫӗрне 40 пӑт ҫавкапуҫне, 13 пӑт кушакхӳри акса хӑварнӑ тепӗр 1897 ҫулта вӗсем утӑ питӗ вӑйлӑ пулнипе, пумайӗшӗ утӑ сутса 50-шар тенкӗ илнӗ, хӑшӗсем 100-шер тенкӗ те илнӗ; курӑк акма тытӑнаҫҫен вӗсем хӑйсем утӑсем илсе 50 шар тенкӗ мар, нумайтарах та пӗтернӗ; вӑл утта та айака 12-20 ҫухрӑма кайа-кайа илнӗ.

Курӑк акма тытӑнсан вӗсем выҫӑх та нумайтарах усра пуҫланӑ. Малтанах Брюхановри хресҫенсем хӑйсен хирне тӑватӑ пусса уйӑрсан, урӑх йалти хресҫенсем кула пуҫланӑ; кайарах, вӗсенҫенех утӑ илме тытӑнсан, хӑйсемех мӗншӗн епӗр те хире тӑватӑ пусса уйӑрмарӑмӑр-ши тесе ӳкӗннӗ. Халӗ ӗнтӗ Брюхановӑ таврари хреҫҫенсем пурте хирӗсене тӑватӑ пусса уйӑрса, курӑк акма тытӑнҫӗҫ.

Якшин хресҫенӗсем ҫуллен 105 пӑта йахӑн ҫавкапуҫ (вӑрри), Павлӑв хресҫенӗсем—24 пӑт, Андреев хресҫенӗсем—70 пӑт акаҫҫӗ.

Виҫӗ пусӑллӑ хиртен йепле тӑватӑ пусӑллӑ хире куҫмаллине 1 мӗш таплитсӑра кӑтартнӑ.

Ҫак таплитсӑна авантарах пӑхсан ак мӗн куратпӑр:

1) Ҫавкапуҫ ыраш ҫине ҫул сиктерсе акӑнаҫ, ҫулма кашни ҫул ҫулӑнаҫ.

2) пӗр вырӑна 6 ҫулсӑр вӑл акӑнмасҫ.

3) ҫур тыррипе ыраш ӗлӗкхинҫен сахалтарах акӑнаҫҫӗ; анҫах ун вырӑнне вӗсен ҫине навус нумайтарах тӑкӑнаҫ; унтан пуҫне тата, ҫавкапуҫ акнипе ҫӗр канса

# 1-МĔШ ТАПЛИТСА

1-мĕш пусă. 2-мĕш пусă. 3-мĕш пусă.

| Çул. 1900 | Ђавкапуçпе ыраш | Ђавкапуç-сăр ыраш | Çуртыри | Навуслăхура пусă ¹) |
|---|---|---|---|---|
| 1901 | Ђавкапуç малтанхи çул | Çуртыри | Хура пусă | Ђавкапуççăр ыраш |
| 1902 | Ђавкапуç иккĕм. çул. | Хура пусă | Ђавкапуçлĕ ыраш | Çуртыри [ыраш хыççăн] |
| 1903 | Çуртыри (ђавка пуç хыççăн) | Ђавка пуççăр ыраш | Ђавкапуç 1-хи çул | Хура пусă |
| 1904 | Хура пусă | Çуртыри (ыраш хыççăн) | Ђавкапуç 2-мĕш çул | Ђавкапуçлĕ ыраш |
| 1905 | Ђавкапуççăр ыраш | Хура пусă | Çуртыри (ђавкапуç хыççăн) | Ђавкапуç 1-хи çул |
| 1906 | Çуртыри (ыраш хыççăн) | Ђавкапуçлă ыраш | Хура пусă | Ђавкапуç 2-мĕш çул |
| 1907 | Хура пусă | Ђ вка пуç 1-хи çул | Ђавкапуççăр ыраш | Çуртыри (ђав) ка пуç хыççăн |
| 1908 | Ђавкапуçлĕ ыраш | Ђавкапуç 2-мĕш çул | Çуртыри (ыраш хыççăн) | Хура пусă |
| | 1-мĕш пусă | 2-мĕш пусă | 3-меш пусă | 4 пусă |

¹) Навуссăр хура пусă

аванланса кайаў; ҫавӑнпа тырӑ ёлёкхинҙен нумайтарах тухма та пултараў.

4) Ёлёк выҙӑхсем кёлтесене хиртен кӯртиҙҙенех вы ҫӑхса ҫӯретҙёҫ; хире тӑватӑ пусса уйӑрса ҙавка пуҫ аксан, вӑл ҙавка пуҫне пёр-ик ерне иртерех ҫулса илсе выҙӑхсене йама йураў; ытти ҙавкапуҫне кайарах вӑхӑтра ҫулмалла вара. Ҫак йенҙен те ҙавкапуҫ акни питё усӑллӑ, выҙӑхсем ёлёкхи пек выҫӑхса ҫӯремеҫҫё.

Хире тӑватӑ пусса уйӑрнине хурламалли йенё те пур, мёншён тесен:

1) ҙавкапуҫ малтанхи ҫул утӑ нумай параў, 2 мёш ҫул сахалтарах параў; ҫавӑнпа утӑ тикёсех пулмасў.

2) Пёр ҫул мён пур ҫур тырри пусси (ыраш хыҫҫӑн) питё ҫемҫе пулнипе йётён акма вырӑн пулмасў, тепёр ҫулне (ҙавкапуҫ хыҫҫӑн) вӑл муклашкаллӑ пулаў, ҫавӑнпа сёлёпе улма акма питех аван пулмасў.

3) Ҙавка пуҫне ҫул сиктерсе акнипе, ҙавка пуҫин вӑрлӑхё пёр ҫул нумай пулаў, тепёр ҫул пёртте пулмасў.

Ҫакна кура халё нумайёшё хирсене сакӑр пусса уйӑра пуҫларёҫё.

## 2-МĔШ

Çулсем 1-мĕш пусă

| 1900 | Ђавкапуçлă ыраш | Ђавкапуççăр ыраш | Ç у р | |
|---|---|---|---|---|
| 1901 | 1 Ђавкапуç 1-мĕш çул | 2 Çуртыри (йĕтĕн) | 3 Çуртыри (сĕлĕ) | 4 Хура пусă |
| 1902 | Ђавкапуç 2-мĕш çул | Хура | Пусă | Ђавкапуçлĕ |
| 1903 | Çуртырри (йĕтĕн) | Ђавкапуççăр ыраш | Ђавкапуçлĕ ыраш | Ђавкапуç 1-мĕш çул |
| 1904 | Хура пусă | Çуртыри (сĕлĕ) | Ђавкапуç 1-мĕш çул | Ђавкапуç 2-мĕш çул |
| 1905 | Ђавкапуççăр ыраш | Хура пусă | Ђавкапуç 2-мĕш çул | Çуртыри (йĕтĕн) |
| 1906 | Çуртыри (сĕлĕ) | Ђавкапуçлĕ ыраш | Çуртыри (йĕтĕн) | Хура пусă |
| 1907 | Хура пусă | Ђавкапуç 1-мĕш çул | Хура пусă | Ђавкапуç-сăр ыраш |
| 1908 | Ђавкапуçлĕ ыраш | Ђавкапуç 2-мĕш çул | Ђавкапуç-сăр ыраш | Çуртыри (сĕлĕ) |
| | 1-мĕш пусă | 2-мĕш пусă | 3-мĕш пусă | 4-мĕш пусă |

# ТАПЛИТСĂ

2-мĕш пусă 3-мĕш пусă

| тыри | | Хура пусă | |
|---|---|---|---|
| 5 Хура пусă | 6 Выђăх ҫўретме | 7 Ђавкапуҫсăр ыраш | 8 Ђавкапуҫлĕ ыраш |
| Ђавкапуҫсăр ыраш | Ҫуртыри (йĕтĕн) | Ҫуртыри (сĕлĕ) | Ђавкапуҫ 1-мĕш ҫул |
| Ҫуртыри (сĕлĕ) | Хура | Пусă | Ђавкапуҫ 2-мĕш |
| Хура пусă | Ђавкапуҫсăр ыраш | Ђавка пуҫлĕ ыраш | Ҫуртыри (йĕтĕн) |
| Ђавкапуҫлĕ ыраш | Ҫуртыри (сĕлĕ) | Ђавкапуҫ 1-мĕш ҫул | Хура пусă |
| Ђавкапуҫ 1-мĕш ҫул | Хура пусă | Ђавкапуҫ 2-мĕш ҫул | Ђавкапуҫсăр ыраш |
| Ђавкапуҫ 2-мĕш ҫул | Ђавкапуҫлĕ ыраш | Ҫуртыри (йĕтĕн) | Ҫуртыри (сĕлĕ |
| Ҫуртыри (йĕтĕн) | Ђавкапуҫ 1-мĕш ҫул | Хура | Пусă |
| 5-мĕш пусă | 6-мĕш пусă | 7-мĕш пусă | 8-мĕш пусă |

II.

# САКӐР ПУСӐЛЛӐ ХИР.

Хире сакӑр пусса уйӑрсан: ыраш, сӗлӗ, ҫавкапус тӑватӑ пусӑ ҫухнехи ҫухлех акӑнаҫҫӗ, уйрӑмӗ унӑн ак мӗн йенҫен анҫах. Хире 8 пусса уйӑрсан ҫавка пус ҫулсерен акӑнаҭ; унтан тата ҫавка пус-тырри пусси ҫине кӑна акӑнаҭ, ыраш пусси тепӗр пайӗ (ҫурри) тепӗр ҫул ҫуртыри пусси пулаҭ. Ҫапла акнине, ҫавкапусин пӗр пайӗ пӗр ҫул ҫулӑнаҭ, тепӗр пайӗ тепӗр ҫул ҫулӑнаҭ; ҫавӑнпа утӑ икӗ ҫулта тикӗсрех пулаҭ. Кунтан пусне тата, сакӑр пусӑ ҫухне ҫуртыри пусси ик ҫӗрте пулаҭ: пӗр пайӗ ыраш хыҫҫӑн, тепӗр пайӗ ҫавкапус хыҫҫӑн. Малтанхи пайӗ ыраш хыҫҫӑн акнипе питӗ ҫемҫе пулаҭ, ҫавӑнпа вӑл сӗлӗ акма аван, тӗпӗр пайӗ йӗтӗн акма аван пулаҭ.

Анҫах сакӑр пусӑ ҫухне ҫуртыри икӗ ҫӗре акнипе выҫӑхсене ҫӳретме хӗсӗк пулаҭ.

Ҫак сакӑр пусӑллӑ хир ҫинҫен калаяи 2 мӗш таплитсӑран паллӑ:

Хире ҫи малтан Волоколамски уйесри Буйкородски вулӑсра, Хрулевӑ йатлӑ йала сакӑр пусса уйӑрма тытӑннӑ.

1892 ҫулта ҫемский управӑн претсетателӗ Д. Н. Шипов хушнӑ тӑрӑх вӗсем хирне 8 пусса уйӑрса икӗ пуссине, мӗн пурӗ 24 анана-ҫавкапус акса хӑварнӑ; унтан вара вӗсем ҫулсерен 12 ана ҫавкапус акса хӑвараҫҫӗ. Хрулев хресҫенӗсен ҫӗрӗ мен пурӗ 194 ана, вӗсенҫен 96 анине кӑна тырӑ акса тӑраҫҫӗ. Тырӑ

акакан ҫěрне вěсем ак йепле уйǎраҫҫě: 24 ана хура, пусǎ 24 ана ыраш пусси, унǎн ҫурри кашни ҫуркунне ѯавкапуҫ акǎнаҥ; унтан тата вěсен 12 ана малтанхи ҫулхи ѯавкапуҫ пулнǎ, 12—иккěмěш ҫулхи ѯавкапуҫпе; ҫуртыри пусси икě пайлǎ пулнǎ, пěр пайě 12 ана-йěтěн акǎнаҥ, тепěр—12 ана сěлě акǎнаҥ.

Ҫак ҫулсенѯе Хрулев хресѯенěсем, ѯавкапуҫ питě аван пулнипе, наѯартарах ҫарансене, ахаѯ усǎсǎр выртакан ҫěрсене сухаласа ѯавкапуҫ ака пуҫларěҫ; ěлěкхи усǎсǎр выртакан ҫěрсем те халě вěсене пысǎк усǎ кўме пултараҫҫě. Хрулев хресѯенěсене кура халě мěн пур Буйкоротски вулǎс тенě пекех хǎйсен хирěсене нумай пусса уйǎрма тытǎнѯěҫ.

---

III.

# УЛТǍ ПУСǍЛЛǍ ХИР.

Хǎш ҫěрте хресѯěнсем ҫарансем сахаллипе, тырǎ акакан ҫěр нумай пулнипе выѯǎхсене ҫўреме аван ирěк пултǎр тесе, хирěсене 6 пусса уйǎраҫҫě. Хире ултǎ пусса уйǎрас тесен, ěлěкхи 3 пусса ҫурмалла кǎна уйǎрмалла (3 таплитса ҫинѯе кǎтартнǎ)..

3-мěш таплитсǎран паллǎ, ултǎ пусǎллǎ хирте хура пусǎ виҫě пусǎ ѯухнехинѯен икě хут кайа пулаҥ; ун вырǎнне халě ѯавкапуҫ ěлěкхинѯен икě хут ытларах акǎнаҥ.

Ҫуртыри 3-пусǎ ѯухнехи пекех йулаҥ, анѯах вǎл икě пайлǎ пулаҥ: пěри йěтěн хыҫěнѯен, тепěр пайě сěлě хыҫěнѯен акǎнаҥ.

3-МЁШ

çулсем 1-мёш пусă

| 1900 | ҫавкапуçлĕ ыраш | ҫавкапуççăр ыраш | Ç у р |
|---|---|---|---|
| 1901 | 1. ҫавкапуç 1-мĕш çул | 2. çуртыри (сĕлĕ) | 3. навуслă хура пусă |
| 1902 | ҫавкапуç 2-мĕш çул | хура пусă | ҫавкапуçлă ыраш |
| 1903 | çуртыри (йĕтĕн) | ҫавкапуçлă ыраш | ҫавкапуç 1-мĕш çул |
| 1904 | çуртыри (сĕлĕ) | ҫавкапуç 1-мĕш çул | ҫавкапуç 2-мĕш çул |
| 1905 | хура пусă | ҫавкапуç 2-мĕш çул | çуртыри (йĕтĕн) |
| 1906 | ҫавкапуçлĕ ыраш | çуртыри (йĕтĕн) | çуртыри (сĕлĕ) |
| 1907 | ҫавкапуç 1-мĕш çул | çуртыри (сĕлĕ) | хура пусă |
| 1908 | ҫавкапуç 2-мĕш çул | хура пусă | ҫавкапуçлĕ ыраш |
| | 1-мĕш пусă | 2-мĕш пусă | 3-мĕш пусă |

Ултă пу

ТАПЛИТСĂ

2-мĕш пусă 3-мĕш пусă

| т ы р и | навуссăр хура пусă | навуслă хура пусă |
|---|---|---|
| 4. навуссăр хура пусă | 5. çуртыри (йĕтĕн) | 6. ђавкапуçлă ыраш |
| çуртыри (йĕтĕн) | çуртыри (йĕтĕн) | ђавкапуç 1-мĕш çул |
| çуртыри (сĕлĕ) | çуртыри (сĕлĕ) | ђавкапуç 2-мĕш çул |
| хура пусă | хура пусă | çуртыри (йĕтĕн) |
| ђавкапуçлĕ ыраш | ђавкапуç 1-мĕш çул | çуртыри (сĕлĕ) |
| ђавкапуç 1-мĕш çул | ђавкапуç 2-мĕш çул | хура пусă |
| ђавкапуç 2-мĕш çул | çуртыри (йĕтĕн) | ђавкапуçлĕ ыраш |
| çуртыри (йĕтĕн) | çуртыри (сĕлĕ) | ђавкапуç 1-мĕш çул |
| 4-мĕш пусă | 5-мĕш пусă | 6-мĕш пусă |

сăлă хир.

Хресҫенсем нумайӗшӗ хире ултӑ пайа уйӑрсан ыраш сахал акӑннӑран питӗ хӑраҫҫӗ; унтан хӑрамалла мар, мӗншӗн тесен хире 6 пусса уйӑрсан навус та нумайтарах тӑкӑнаҭ, унтан тата ыраш пӗр вырӑна 5 ҫултан тин акӑнаҭ; ҫавӑнпа тырӑ 3 пусӑллӑ ҫухнехинҫен ытларах та пулма пултараҭ.

Ултӑ пусӑллӑ хир питте аван пулӗҫҫӗ те, анҫах ҫавка пуҫ пӗр вырӑна ҫас ҫасах акӑнаҭ; епӗр, ҫавка пуҫне пӗр вырӑнах 6 ҫул иртмесӗр акма йурамасҭ, тенӗҫҫӗ; халӗ кунта вӑл 4 ҫултанах акӑнаҭ.

Ултӑ пусӑллӑ хир йӗтӗн нумай хирлӗ ҫӗрте питӗ аван, ҫакӑн пек хирте йӗтӗн ҫулленех акӑнаҭ.

---

## IV.

# ПИЛӖК ПУСӐЛЛӐ ХИР.

Пилӗк пусӑ ҫухне, 4 пусӑ ҫухнехи пекех, ҫавкапуҫ ҫул сиктерсе акӑнаҭ; вӑл ӗлӗкхи пек пӗр вырӑнта икӗ ҫул 4 пулаҭ; малтанхи икӗ ҫулта уттине ҫулаҫҫӗ, тата ытти икӗ ҫулӗнҫе выҫӑхсене ҫӳретеҫҫӗ, ҫуртыри пусси ӗлӗкхи пекех пӗр ҫул ҫемҫе, тепӗр ҫул хытӑ, муклашкаллӑ пулаҭ.

Хӗрлӗ ҫеҫеклӗ ҫавкапуҫ пӗр-ик ҫул кӑна аван пулаҭ; пилӗк пусӑ ҫухне вӑл пӗр вырӑнтах 4 ҫул лармалла пулаҭ, ҫавӑнта вӑл йулашки ҫулсенҫе питӗ наҫар пулаҭ; халӗ пӗр ыраш акас вырӑна 2 кӗрепенкӗ хӗрлӗ ҫеҫеклӗ, 1 кӗрепенкӗ шур ҫеҫеклӗ ҫавка пуҫӗпе кӗрепенкӗ ҫурӑ кушак хӳри акас пулаҭ; мӗн пур $4^1/_2$ кӗре-

пенкĕ. Шур ђеђеклĕ ђавкапуçпе кушакхўри пĕр вырăнта вистăват çул хушши аван пулма пултараĭ; унтан пуçне тата шур ђеђеклĕ ђавка пуç выђăх çинĕ хыççăн ытти курăксенђен хăвăртрах ўсет, вăл вылăх таптанине те тўсерех параĭ.

Пилĕк пусăллă хир ăçта нађар çарансем, татăк-тĕсĕк тырă акакан çĕр хушшинђе акма йурăхсăр çерем нумай, выђăхсене ниçта çўретме çук çĕрсенђе тума питĕ аван, мĕншĕн тесен, вăл çĕрсем нимĕн усăсăрах выртаççĕ: вĕсем çинђе курăк нађар пулаĭ, тырă аксан тырă пулмасĭ, вĕсем тырă хушшинђерен, çав выђăхсене çўретме те йурамасĭ; çĕрсене курăк акса тырă акакан çĕр çумне хутăштарса хире пилĕк пусса уйăрсан, ута та нумай пулаĭ, выђăхсене çўреме те çĕр пулаĭ.

Хире пилĕк пусса уйăрсан, выђăхсене хура пуса çине йамасан та йураĭ, мĕншĕн тесен вĕсем валли унтан пуçнə те çĕр нумай; хура пусса кĕркуннех сухаласа хăвармалла; çапла сухаланни Питрав тĕлнелле сухаланинђен усăлăрах мĕншĕн тесен кĕркунне сухаланă хура пусăра тырă авантарах пулаĭ.

Ђи малтан хире Волоколамски уйесра, Хован йатлă йалта пилĕк пусса уйăрнă; вĕсем 145 ђуна 340 ана çĕр акса тăнă (4 таплитсă).

---

# 4-МӖШ ТАПЛИТСӐ

1-мӗш. пусӑ 2-мӗш пусӑ 3-мӗш пусӑ

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1900 | Ђавкапуç-лӗ ыраш. | Ђавкапуç-сӑр ыраш | Çуртыри | Навуссӑр хура пусӑ | Навуслӑ хура пусӑ |
| 1901 | 1 Ђавкапуç 2-мӗш çул. | 2 Çуртыри | 3 Хура пусӑ | 4 Выђӑх-сене çӳрет-мелли. | 5 Ђавкапуç сӑр ыраш |
| 1902 | Ђавкапуç 2-мӗш çул | Хура пусӑ | Ђавкапуç-лӗ ыраш | Выђӑхсе-не çӳрет-мелли | Çуртыри |
| 1903 | Ђавкапуç 3-мӗш çул (выђӑхсем вађли) | Ђавкапуç-сӑр ыраш | Ђавкапуç 1-мӗш çул | Çуртыри | Хура пусӑ |
| 1904 | Ђавкапуç 4-мӗш çул (выђӑх ва-ђли) | Çуртыри ыраш хыç-çӗн | Ђавкапуç 2-мӗш çул | Хура пусӑ | Ђавкапуç-лӗ ыраш |
| 1905 | Çуртыри | Хура пусӑ | Ђавкапуç 3-мӗш çул (выђӑхсем вађли) | Ђавкапуç-сӑр ыраш | Ђавкапуç 1-мӗш. çул |
| 1906 | Хура пусӑ | Ђавкапуç-лӗ ыраш | Ђавкапуç 4-мӗш çул (выђӑхсем ваљђи) | Çуртыри (ыраш хыç-çӑн) | Ђавкапуç 1-мӗш çул |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| 1907 | Ђавкапуç-сăр ыраш | Ђавкапуç 1-мĕш çул | Çуртыри | Хура пусă | Ђавкапуç 3-мĕш çул (выђăхсем вађђи) |
| 1908 | Çуртыри ыраш хыç-çăн. | Ђавкапуç 2-мĕш. çул (выђăхсем вађли) | Хура пусă | Ђавкапуç-лĕ ыраш | Ђавкапуç 4-мĕш çул (выђăхсем вађли) |
| 1909 | Хура пусă. | Ђавкапуç 3-мĕш çул. (выђăхсем вађли) | Ђавкапуç-сăр ыраш | Ђавкапуç 1-мĕш çул | Çуртыри |
| 1910 | Ђавкапуç-лĕ ыраш | Ђавкапуç 4-мĕш çул (выђăхсем вађли) | Çуртыри (ыраш хыç-çăн | Ђавка пуç 2-мĕш. çул | Хура-пусă |
| 1911 | Ђавкапуç 1-мĕш çул | Çуртыри | Хура пусă | Ђавкапуç 3-мĕш. çул (выђăхсем вађли) | Ђавкапуç-сăр ыраш |
| 1192 | Ђавкапуç 2-мĕш çул | Хура пусă | Ђавкапуç лĕ ыраш | Ђавкапуç 4-мĕш çул (выђăхсем вађли) | Çуртыри (ыраш хыç-çăн) |
| 1913 | Ђавкапуç 3-мѐш çул (выђăхсем вађли) | Ђавкапуç-сăр ыраш | Ђавкапуç 1-мĕш çул | Çуртыри | Хура пусă |
| | 1-мĕш çул | 2-мĕш çул | 3-мĕш çул | 4-мĕш çул. | 5-мĕш. çул. |

V.

# ЙУЛАШКИНЂЕН КАЛАНИ.

Хире нумай пусăллă тăвас тесен йаланах акă мĕн астумалла:

1) Çĕнĕ пусă выђăхсене çўреме аван пултăр тесен вăл йал çумĕнђе пулмалла.

2) Пусăсем пур-те пĕр пек пулмалла.

3) пусăсене хресђенсем хуштинђе тикĕс уйăрма тăрăшмалла.

Хресђенсем хăйсем хирĕсене курăк акма тытăнас тесен, акрономсенђен кайса ыйтмалла, вара вĕсем миçе пусăллă хир çав вырăнта авантараххине каласса парĕçĕ.

Халĕ тата çĕр ĕçне туса тăракан пăйсенђен (земотделы) курăк вăррисене сăнаса пăхма ахалех те параççĕ.

Епĕр мĕн пур каланинђен, курăк акни питĕ усăлли паллă курăнђĕ.

Ђавкапуç аксан çăкăрсăр йулатпăр, пирĕн çĕр çинђе вăл пулмасť, ăна аксан выђăхсене ниçта çўреме пулмĕ, тесе ан шухăшлăр. Çĕре ĕлĕк аван ĕçлесе тăнă пулсан, ђавкапуç те аван пулаť;

Ђавкапуç пулсан-вылăх та, навус та, çăкăр та пулаť. Выђăхсене çўретме халĕ çĕр те ирĕкрех пулĕ.

Малтанах Волоколамски уйĕсра та курăк акни усăсăр ĕç тетђĕç, халĕ ĕнтĕ ђавкапуç акман йал-та тупаймастăн. Çур уйес ытла виçĕ пусса пĕтерсе, хирĕсене нумай пусăллă турĕç. Пĕр çулта кăна вăл уйесраултă

пин пăта йахăн ҫавкапуҫ акса хăварнă. Тепĕр 1899 ҫулта 900 анаран ҫавкапуҫ ути пуҫтарнă. Курăк акни усăлă пулмасан, вĕсем те ҫав тери нумай акмĕҫҫĕҫ.

Ҫавкапуҫне утă валли Мускав кĕпĕрнинҫе питĕ нумай акаҫҫĕ; ăна ытти кĕпĕрнесенҫе те пайтах акаҫҫĕ; Тверь, Смоленск, Псков, Новокорот, Владимĕр, Кострăма, Ярослав, Перм ытти кĕпĕрнесенҫе те ăна сахал мар акаҫҫĕ.

Есĕр те, халĕ ĕнтĕ ҫак кĕнекене тĕплĕ вуласа ĕлĕк курăк акман ҫынсем хăвăр ҫĕрĕре курăк акса пăхтарăр, вара вăл сире аван тырă парĕ!

---

# КУÇАРАКĂНТ̆АН.

## ÇАРАНСЕНЕ ЛАЙĂХЛАТМАШКĂН КИРЛĔ ЙАПАЛаÇЕНЕ МĔНЛЕ МАЙПА ТУПМА ПУЛАТ̆.

Çак кĕнекене вуласа ђухласан ђухласан нумайĕшĕ ăçтан тупас-ха çарансене лайăхлатмашкăн кирлĕ йапаласем? тесе ыйтĕç.

Ђăнах та халĕ хресђен халăхĕ, Раççейре йухăну пирки, пит аптăрат̆, пуринђен ытла ăна выçлăх пит пĕтерђĕ. Çавăн пек пысăк, усăллă ĕçе пуçăнмашкăн унăн укçи те, выђăххи-ђĕрлĕххи те йе вуçах çук, йе пулсан та çителĕклĕ мар; машшинсем те çук. Хресђенсем вĕсем çав ĕçрен хăрасах тăрас çук та, анђах пушă алăпа нимĕн те тăвайас çуккине вĕсем пĕлсех тăраççĕ.

Анђах çапах та çарансене лайăхлатасах тесе çунакансемшĕн хађхи вăхăтра та çул пур.

Çав çулпа кайас тесен йалти хресђенсен 10—20 килĕн (сахалтараххăн та йурат̆) пĕрлешсе йалхуçайствăллă йулташлăхсем (сельско-хоз. товарищества) тăвас пулат̆.

Çарана лайăхлатас тесен тĕрлĕрен машшинсемпе тата пĕлсе ĕçлес пулат̆. Çав машшинсене йулташлăха кĕнĕ хресђенсем ђасрах илме пултараççĕ: çĕр ĕçлемелли

машшинсем ҫи малтан ҫавӑн пек оркanисатсисене парӑнаҫҫӗ. Тата вӗсем пӗр пӗр ӗҫе ӑнтармашкӑн уйесӗн йе кӗпӗрнен ҫӗр уйрӑмӗнҫен укҫа та ытти йапала та кивҫен илме пултараҫҫӗ.

Анҫах кашни харпӑр хӑй тӗллӗн ӗҫлес текенсене машшинсем те укҫа та тивӗҫес ҫук, ҫавӑнпа та вӗсем ӗҫе ӑнтарайас ҫук.

Йулташлӑха кӗрсен хресҫене пур йенҫен те лайӑх: емелҫӗ те ҫӑмӑл, ӗҫӗ те ҫас пулса пырать тата вӗсем ӗҫӗсене вырӑнсенҫи акрономсем вӗрентнӗ тӑрӑх туса пыма пултараҫҫӗ.

Йулташлӑха ӑна пӗрлешсе ӗҫлесе ӗҫе ӑнтарма, ӗҫлеме ҫӑмӑлтарах пултӑр тесе тӑваҫҫӗ. Йулташлӑха кӗрекен хресҫен пӗрле ӗҫлеме пӗр-пӗр хатӗрсем йе тата выҫӑх-ҫӗрлӗх парсан, вӗсем пурте хӑйсеннех шутланса тӑраҫҫӗ, ҫӗрӗсем те хӑйӗн аллинҫех пулаҫҫӗ. Пӗрле ӗҫлесе тунӑ йапалисене йулташлӑхри ҫленсем валеҫсе илеҫҫӗ; кам выҫӑх-ҫӗрлӗхпе те хӑй те нумай ӗҫленӗ (машшинӑ та ҫавах), пӗрлехи ӗҫе нумай тунӑ, вӑл ҫын кирек мӗнле йапалана та (валеҫнӗ ҫухне) ытларах илме пултарать. Йулташлӑхран тухас тесен хутте кам та хӑйӗн йапалисене кайалла илсе тухма пултарать, вӗсене йулташлӑх тытса йулма пултараймасть.

Анҫах, ҫапах та ҫарансене, тырпулла лайӑхлатасах пулать. Ӑна тӑвас тесен хресҫенсен пӗрлешсе йулташлӑхсем тӑвас пулать: йулташлӑхсемпе пурне те тума пулать—4 пуссине те, 5—6—7—8 пуссине те.

Пирӗн ҫӑваш хресҫенӗсен хуҫайствисене хӑйсем пӗрлешсе тунӑ йулташлӑхсем анҫах урисем ҫине тӑратӗҫ.

*Таҫук.*

## Хӗвелтухӑҫӗнҗи Теп Истатӗлстви ҫумӗнҗи Җаваш Ҫекси кӑларакан кӗнекесем.

### Сутмалли кӗнекесем:

1. **Т. Коваленко.** Политкрамота кӗнеки—20 пус.

2. **Н. Мещеряков.** Канаш Раҫҫейӗнҗи Копператси—15 пус.

### I. Ҫапса кӑлараҫҫӗ.

**Гуров, П. Я.** Раҫҫей Фетерацин Социалисӑмпа Канаш Респупликин Ҫӗр Котексӗ.

### II. Ҫапма хатӗрлеҫҫӗ.

**Бляхин.** Пупсем хурахалӑха йепле улталаҫҫӗ (Ку кӗнекепе пӗрле җӑваш киреметсем, йӗрӗхсем, тукатмӑшпем, йумӑҫҫем т. ыт. ҫинҗен тухаӗ).

**Лядов, М.** Раҫҫей Комуниссен Парти 25 ҫул тултарни (Тата җӑваш хушшинҗе революци ӗҫӗ мӗнле пулни—Ф. Н. Сергеев ҫырнӑ).

### III. Куҫараҫҫӗ.

1. **Викторов.** Иссторня развития общественных форм.

2. **К. Маркс и Ф. Энгельс.** Коммунистический манифест.

3. **Стучка.** Общее учение о государстве и конституция Р. С. Ф. С. Р.

4. **Костычев.** Общее руководство по земледелию.

ВОСТИЗДАТ
С.С.С.Р.